Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ОКТЯБРЬ 14 ЕРНЕКУН 237(5050) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать — ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ — Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Шупашкар, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, йалхуçалăх пайĕн—4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Комсомолăн йалти çамрăксем хушшинчи ĕçĕсем çинчен

Колхозсене пĕрлешнĕ совет хресченĕсем хăйсен пуйан та кулђтурала пурнăçне кулленех ÿстерсе пыраççĕ. Коммуниссен партийĕ, унăн сталинла Тĕп Комитечĕ тата совет правителĕстви йертсе, кулленех пулăшса пынипе колхозлă йал хуçалăхĕ вăйлă машинăсемпе хĕçпăшалланчĕ, организацилĕх йенчен, економика тĕлĕшĕнчен çирĕпленчĕ. Колхозникăн ĕçне механизациленĕ, колхозра ĕçлеме çăмăлланчĕ. Çĕре колхозсене усă курма ĕмĕрлĕхех çирĕплетсе панă. Патша вăхăтĕнчи нÿшалăх, çуклăх, правасăрлăхпа чуралăх ĕмĕрлĕхех тĕп пулчĕç. Пайанхи колхозникăн пурнăçĕ телейлĕ, савăнăçлă, вăл пусмăрлăхран хăтăлнă, вăл хăйĕн пултарулăхĕпе хастарлăхне аталантарса пырать, колхозлă уйхиртен çулсерен 7—8 мĕлйард пăт тĕш тырă туса илессишĕн кĕрешет.

Халăх тăшманĕсем—троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла бандитсем колхоз стройне çĕмĕрме, хресченсене тепĕр хут выçлăха, çуклăха, правасарлăха кĕртсе йама шутланă. Тăшмансен ĕмĕчĕ арканчĕ. Колхозлă хресченсем коммуниссен партийĕ тата аслă çулпуç Сталин йулташ тавра нихăçанхинчен те ытла çирĕппĕн пĕтĕçрĕç, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе коммунисăм патне çĕнтерÿлĕн пыраççĕ.

Колхоз стройĕ çĕнтернĕ май, йалти çамрăксен пурнăçĕнче те питĕ пысăк улшăнусем пулчĕç. Колхоз çамрăкĕсен пурнăçĕ лайăхланчĕ, вĕсене ĕçлеме, вĕренме, кăмăла кайакан квалификацине туйанма пур майсене те туса панă. Выçлăхпа çуклăха, тискер експлоатацине пĕлмеççĕ вĕсем. Колхозри çамрăксем колхоз стройĕ пана ырлăхпа туллин усă кураççĕ. Акă, Вăрнар районĕнчи çамрăксем иртнĕ висĕ уйăх хушшинче 24 патефон, 15 фотоаппарат, 30 балалайкă, 5 мандолинă, 2 пианинă, 27 çĕвĕ машинĕ, 11 велоçипед, 10 радиоприйомник, хуткупăссем тата ыттисене те туйаннă. Ку ĕнтĕ пирĕн колхоз çамрăкĕсен материаллă пурнăçĕ лайăхланнине кăтартса парать.

Çĕршер пин çамрăк колхозниксем колхоз производствинчи чи ответлă участкăсенче йертсе пыраççĕ. Колхозсенче социалисăмлă ăмăртăва, стаханăвла йухăма пуçарса пыраççĕ, йалхуçалăх техникине алла илессишĕн кĕрешеççĕ, пур çĕрте те тÿрĕ ĕçлесе хăйсене хисепе кăлараççĕ, вĕсене хресченсен массисем хĕрÿлĕн йуратаççĕ.

Йалти çамрăксен политикăлă активлăхĕ те çÿле хăпарчĕ. Вĕсен кăмăлĕсем техникăпа наукăна алла илес, марксисăмăн-ленинисăмăн револђуцилĕ теорипе хĕçпăшалланас, Ленин пек, Сталин пек пулас туртăмпа тулнă. Колхозра пурнăç лайăхланнă май, çамрăксем килти пурнăçа лайăх йĕркелесшĕн, пушă вăхăта кулђтурăлă, савăнăçлă ирттерессшĕн, литературăпа, искусствăпа, спортпа паллашасшăн çунаççĕ.

Колхозлă йалта комсомолăн вырăнĕ те çÿлĕ ÿсрĕ, малала та ÿссе пырать. Халăх тăшманĕсемпе кĕрешсе, хăйĕн речĕсене вĕсенчен тасатса пырса, комсомол речĕсем тĕрекленчĕç, çирĕпленчĕç, комсомолăн çапăçу пултарулăхĕ ÿсрĕ, револђуцилĕ сыхăлăхĕ хăпарчĕ. Колхозри комсомол, уйрăмăнах парти организацийĕ çук колхозра, питĕ пысăк политикăлă вăй пулса тăрать. Вăл хăйĕн вăйне, политикăлă организацилĕхне, çавăн пекех, вăл йалти çамрăксене йертсе пыракан пысăк вăй пулса тăнине Верховнăй Советсен суйлавĕнче питĕ лайăх кăтартса пачĕ.

Анчах, апла пулин те, йалти комсомолăн организацилĕ тата политикăлă ĕçĕ колхоз çамрăкĕсен политикăлă активлăхĕ ÿсĕмĕнчен йулса пырать-ха. Колхозри комсомол организацийĕсенчен чылайĕшĕ сойузра тăман çамрăксенчен уйăрăлса кайнă, йалти обшчĕствăлă-политикăлă пурнăçа сахал хутшăнаççĕ, çамрăксем хушшинче политикăлă ĕçе питĕ те сÿрĕккĕн туса пыраççĕ. Çавна пулах ĕнтĕ, пирĕн республикă тăрăх 431 колхозра халĕ те комсомол организацисем çук. Колхозсенче комсомол организаци тăвас тĕлĕшпе ПСÇЛКС Елĕк, Шупашкар, Трак, Ишлей, Тутаркас, Çĕрпÿ райкомĕсем питĕ начар ĕçлеççĕ.

Кăçал пĕрремĕш çурçуллăхра ПСÇЛКС Чăваш организацийĕ малта пыракан совет çамрăкĕсенчен 8.943 çынна хăйĕн речĕсене йавăçтарчĕ пулсан, йулашки уйăхсенче комсомол ÿсĕмĕ палăрмалăх чакрĕ. Тахçантанпах ÿсмен пуçламĕш организацисем те нумай. Елĕк районĕнче—21, Вăрмарта—13, Сĕнтĕрвăрринче—11 организаци халиччен пĕр çамрăка та комсомола илмен. 3—5 çынран тăракан пĕчĕк йышлă организацисем республикăра 890 шутланаççĕ.

ПСÇЛКС райкомĕсем комсомола çĕнĕрен илнисем хушшинче ĕçлессине манăçа хăварнă. Комсомолăн хăшпĕр пуçламĕш организацийĕсем çĕнĕ комсомолĕцсене сойуз, обшчĕствă тата государствă ĕçĕсене активлăн хутшăнтарса воспитани парас вырăнне, вĕсем çине чунсăррăн пăхаççĕ, хăш чух сăлтавсăрах взысканисем хураççĕ, комсомол ретĕнчен те кăлараççĕ. Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумĕнче организаци комсомола кăçал кĕнĕ Куçмин йулташа политикăна сахал пĕлет тесе, ПСÇЛКС членĕнчен кандидата куçарнă. Трак райкомĕ комсомола висĕ уйăх кайарах кĕнĕ Воронин йулташа комсомолтан кăларнă. Çамрăксене коммунисла воспитани парас ĕçре кунашкал практикă сийен кăна кÿрет.

ПСÇЛКС чылай райкомĕсем, çавăн пекех ПСÇЛКС Обкомĕ те, колхозри пуçламĕш организацисен ĕçĕсене тимлĕн йертсе пымаççĕ, колхоз çамрăкĕсем хушшинче ĕçлессине тивĕçлипе хакламаççĕ. Тÿрех каламала, вĕсем начар йе лайăх ĕçлекен организацисене вăхăтра курмаççĕ; кам тĕрĕс, кам тĕрĕс мар ĕçленине тĕплĕн пĕлмеççĕ; организацисенче, комсомолĕцсемпе çамрăксем хушшинче сахал пулаççĕ; вĕсене интереслентерекен ыйтусене вăхăтра татса памаççĕ.

Сăмахран, Обком бÿро членĕ Петељникăв йалташ районсем тăрăх „вĕсс" çÿрени мĕне кирлĕ-ха? Вăл нумайăх пулмасть Шăнкăртам райкомне икĕ сехетлĕхе кайса килнĕ. Çав кунах, Шупашкара çитнĕ-çитменех, райкомран „сводкăсем" ыйтса телеграммă йанă. Ку ĕнтĕ Обкомра ĕçлекен работниксен хушшинче ответсăрлăх пысăккине кăтартать. Обком бÿровĕнче политикăлă çивĕчлĕх çителĕксĕр, критикăпа самокритикă та тивĕçлĕ вырăнта мар. Коллективлă йертсе пырассине те пăсаççĕ, час-часах, кворум çук пулин те, комсомол Обкомĕн тата райкомсен бÿровĕсем пулса ирттеççĕ. ПСÇЛКС Шупашкар райкомĕн çекретарĕ Сперанский йулташ икĕ членпа бÿросем ирттерет.

Комсомолăн йалти ĕçне тата комсомола çĕнĕрен кĕнисем хушшинче ĕçлессине мĕнле майпа лайăхлатмали çинчен ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн VI-мĕш пленумĕ лайăх кăтартса пачĕ. ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕн çак кунсенче пулса иртнĕ пленумĕ те çак тĕлĕшпе татăклă решенисем йышăнчĕ. Вăл решенисене кашни активиса, кашни комсомолĕца ăнлантарса памала, вĕсем ăна лайăх пĕлччĕр, хăйсен организацин ĕçĕнчи çитменлĕхĕсене тарăннăн тишкерсе тухчăр, комсомолăн организацилĕ тата политикăлă ĕçне вăйлатас ĕçе активлăн хутшăнччăр.

Йалти çамрăксене ПСК(б)П историн Кĕске курсне тарăннăн вĕрентме пур майсене те туса памала. Болђшевикла парти историне вĕрентсе, çамрăксене Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн, совет халăхĕшĕн тата совет влаçĕшĕн чĕререн тăракан, халăхăн мĕнпур тăшманĕсене бухаринла, троцкисла, буржуалă-националисла шпионсене, сăтăрçăсене тата диверсантсене курайми тăвас шухăшпа вĕрентсе пымала. Кашни комсомолĕца сойуз, обшчĕствă тата государствă ĕçне активлăн хутшăнтармала, вĕсенчен кашнийех производствăра стаханăвĕç-ударник пултăр, пур çĕрте те социалисăмлă ăмăртăва пуçарса пытăр, партипе правителствă кăларса тăратакан задачăсене хресченсене ăнлантарса патăр. Çак задачăсем вĕсем комсомол организацисен ĕçĕсенче тĕп вырăн йышăнса тăмала.

„Родина" самолђот екипажĕ Комсомолђска çитнĕ

Октăберĕн 12-мĕшĕнче, Мускав вăхăчĕпе 12 сехет те 55 минутра, „Родина" самолђотăн паттăр екипажĕ—Гризодубăвă, Осипенко тата Раскова йулташсем Амур çинчи Комсомолђск хулине çитнĕ.

Хаклă хăнасене кĕтсе илме хулари ĕççыннисем, партипе совет тата обшчĕствăлă организацисен руководителĕсем, „Родина" самолђот екипажне шырас ĕçе хутшăннă лђотчиксемпе парашÿтиссем пынă.

Паттăр лђотчицăсем çитнĕ йатпа хулари стадионра митинг пулса иртнĕ, вăл митингра 30 пин çын пулнă.

Партин хула комитет çекретарĕ Пегăв йулташ хулари ĕççыннисен йачĕпе мухтавлă героињăсене чаплă çĕнтерÿшĕн тав тăвать, унтан вăл сталинла заданине ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн самолђот командирне Валентинă Гризодубăвă йулташа йалав парать.

Гризодубăвă йулташ трибунă çине тухнине митингри çынсем нумайччен тăвăллăн алă çупнипе кĕтсе илеççĕ.

— „Родина" самолђотăн екипажĕ,—тенĕ вăл,—çак йалава илсе ăна чыслăн тытса тăма пулни çинчен тата тунă çитĕнÿсемпе лăпланса ларманни çинчен шантарать.

Пирĕн екипаж заданине пурнăçа кĕртмесĕр тăма пултарайман. Сталин йулташ çĕнтерĕве чĕнет пулсан, вăл çĕнтерÿ пулмалах.

„Родина" самолђот екипажĕ хăйĕн çуначĕсем çинче пирĕншĕн пуриншĕн те хаклă сăмаха—Тăван çĕршыв йатне тытса пычĕ. Вăл сăмаха епĕр Мускавран пуçласа çак тĕлĕнмеле чаплă крайа çити хамăрăн чĕресенче тытса пытăмăр.

— Пирĕн коммунисла парти,—тесе калать малала Гризодубăвă йулташ,—тăван çĕршывăн шанчăклă ывăл-хĕрĕсене вĕрентсе ÿстерет. Вĕсене вăл вĕрентсе ÿстерет тата çĕнтерÿсем патне чĕнет. Вĕсенчен кашнийех хăйĕн ĕçĕнче, парти тăрăшса пулăшса пынипе, чаплă çĕнтерÿсем туса пыраççĕ.

Епĕр хамăр çĕнтерĕве аслă коммунисла партине пула, хамăр аннене—тăван çĕршыва пула турăмăр. Спасибă Сире, йулташсем, пире пулăшнăшăн. Спасибă çамрăксен хулинчи ĕççыннисем, спасибă пĕтĕм çĕршыва, хамăрăн нумай мĕлйунлă аслă халăха!

Мухтавлă екипажăн командирĕ каланă чухне социалисăмлă тăван çĕршывăн çаксем пек хăйулă хĕрĕсене çитĕнтерекене—Сталин йулташа чысласа темиçе хутчен нумай вăхăт хушши тăвăллăн алă çупса оваци тăваççĕ.

Унтан „Родина" самолђотăн иккĕмĕш пилочĕ Полина Осипенко йулташ тухса сăмах калать.

— Епĕр 26 сехет те 29 минут хушшинче,—тет хăйулă лђотчицă,—çĕршывăн чĕринчен—Мускавран Инçет-Хĕвелтухăçне вĕçсе тухрăмăр. Çынсем пурăнман пушă вырăна анса ларнă хыççăн та епĕр хăраса ÿкмерĕмĕр, пăшăрханмарăмăр, мĕншĕн тесен пирĕн çĕршыв çынна вилме паманнине епĕр лайăх пĕлсе тăнă.

Пирĕн ирĕке тухнă совет хĕрарăмĕ мĕн тума пултарнине халăх тăшманĕсем пĕлсе тăччăр. Совет халăхĕн вăйĕ нумай. Пирĕн халăх, пирĕн Хĕрлĕ Çар совет хĕçпăшалĕн вăйне, совет çыннисен çирĕплĕхне Хасан кÿлли патĕнче лайăх кăтартса пачĕç. Пирĕн никам пырса тĕкĕнмеле мар чикĕсем çине килсе тапăнма хăйакансемшĕн пысăк хуйăх пулĕ. Епĕр хамăрăн паттăр самолђотсене тăшман ăстан килсе тапăнма хăтланать, çавăнта илсе кайăпăр. Пирĕн таса чикĕсем çине хăйса килекен тăшмансемшĕн пĕриншĕн те нимĕнле каçару та пулмасть.

Митинга пухăннă çынсем хăйулă штурман Марина Раскова йулташăн хĕрÿлĕ сăмахĕсене пысăк тимлĕхпе итлеççĕ. Вăл вĕçевре пулнă йăварлăхсем çинчен калать, „Родина" самолђот екипажĕ пысăк йăварлăхсене çĕнтерсе парти панă заданине, Сталин йулташ заданине пурнăçа кĕртни çинчен калать. Унтан Раскова йулташ совет самолђотне пысăк пахалăхпа тунине палăртать, вăл тайгара самолђот анса ларнă чухне штурмăн ларакан кабинă пăсăлма пултарнă пирки хăйĕн парашÿтпа сикмеле пулни çинчен калать.

— Самолђот патне кайала пырса тухнă хыççăн епĕ, — тет Раскова йулташ,— тÿррех штурмăн вырăнне пырса пăхрăм. Штурмăн вырăнĕ пĕтĕмпех йусавлă пулнинчен питĕ тĕлĕнтĕм. Совет савăтĕнче, совет инженерĕсемпе рабочисем туса хатĕрленĕ приборсем пĕтĕмпех ним чăрмавсăр ĕçлеççĕ.

Епĕр инçене вĕçес йенĕпе тĕнчери рекорда хамăр алла илме вĕçрĕмĕр. Ку рекорд висĕ çул хушши Америкă лђотчицин Ерхарт аллинче пулнă. Вăл лђотчицă талантлă, пултарулă пулнă, анчах вăл лђотчицă капиталисăмлă государствăра ÿссе çитĕннĕскер пулнă. Çак лђотчицă тĕнче тавра вĕçсе çаврăнма тухсан, океана путса вилнĕ. Ана никам та çăлман, вăл пĕччен пулнă, унăн йĕри-тавра урса кайнă капиталисăм тăнă.

Епĕр инçене вĕçес йенĕпе рекорд тума вĕçрĕмĕр. Ку йенĕпе халиччен пулнă рекордран 2 пин километр иртерсе вĕçрĕмĕр. Тайгари шурлăха анса ларнă хыççăн, „Родина" екипажĕн икĕ çынни пĕр çĕрте, епĕ—пĕччен тепĕр çĕрте пулнă вăхăтра, епĕр Амели Ерхарт марри çинчен пĕр минутлăха та манмарăмăр. епĕр совет лђотчицисем, вăл лђотчицăсене совет халăхĕ йуратать, вăт лђотчицăсене Сталин йулташ йуратса вĕрентсе ÿстерет, çавăнпа та епĕр пирĕн пата пулăшма пыраççех, тесе шухăшланă.

Раскова йулташ хăйĕн сăмахне çапла каласа вĕçлет:

— Спасибă пирĕн халăха, спасибă коммунисла партине, спасибă пирĕн халăхсен çулпуçне, пирĕн туса тата аттене Сталин йулташа!

Сывă пултăр Сталин йулташ!

(Нумайччен алă çупаççĕ. — „Интернационал").

Хулари ĕççыннисен йачĕпе мухтавлă героињăсене врач Наседкинă йулташ саламланă. Ун хыççăн трибунă çине „Родина" самолђот ларнă вырăна чăн малтан пырса тупнă Сахăрăв лђотчик тухать. Вăл хăйĕн сăмахĕнче гражданла сывлăш флочĕн лђочикĕсем кирек хăш минутра та çар самолђочĕсем çине ларса пирĕн таса совет çĕрĕ çине хăйса килекен тăшмана çĕмĕрсе тăкма хатĕр тăни çинчен мухавлă екипажа шантарать.

Митинга пухăннисем нумайччен тăвăллăн алă çупса Сталин йулташ патне саламлă телеграммă йама йышăнаççĕ.

(ТАСС).

СОВЕТ СОЙУЗĔ ТĂРĂХ

** Октăберĕн 12-мĕшĕнче пăрçĕмрен „Иосиф Сталин" Диксон утравĕнчен тухса Мурмăнск патнеле çул тытнă.

** Октăберĕн 12-мĕшĕнче Батумире противогазсем тăхăнса Батуми — Нефтеперегоннăй савăт маршрутпа (5 километр) пысăк поход туса иртернĕ. Похода хулари рабочисем, служăшчисем тата инженерлă-техниклă работниксем пурĕ 8.000 çын хутшăннă. Похода ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă йатпа тунă.

** Октăберĕн 11-мĕшĕнче Коми АСС Республикĕнче пур çĕрте те вăйлă йур çума пуçланă. Республика столицинче—Сыктывкарта—йур хуламĕшĕ 20—30 сантиметра çитет.

(ТАСС).

Китайри вăрçă

Центр Китайра Лучжоупа Синђйан хушшинчи шоççе çулĕ çинче йапонĕцсем чукунçул çинчи Синђйан йатлă пункт çине наступлени туса пыраççĕ.

Цзÿцзйан—Нањчин линийĕ çинче хайарран çапăçнă хыççăн Китай çарĕсем Икоуран тухса кайнă.

Гуанчжоуран кăнтăр-хĕвелтухăç йенче хайар çапăçусем пыраççĕ. Йапонĕцсем тупăсенчен химилĕ снарйадсемпе переççĕ.

Çурçĕр Китайра Шањдун провинцинче Китайăн регуљарлă чаçĕсем Тањцзин—Пукоу чукунçулĕ çинчи икĕ хулана туртса илнĕ.

Хенањ провинцин çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче йулашки висĕ уйăх хушшинче китайĕцсемпе çапăçса йапонĕцсен 20.689 çын аманнă тата вилнĕ.

Октăберĕн 12-мĕшĕнче Кăнтăр Китайра йапонĕцсем Биас заливĕнче (Гонконгран çурçĕр-хĕвелтухăç йеннерех) пысăк десант антарса хăварнă. Халђхи вăхăтра Биас заливĕнчен çурçĕр йенче çапăçусем пыраççĕ.

(ТАСС).

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмала): „Родина" самолђотăн иккĕмĕш пилочĕ капитан-орденоносĕц П. Д. Осипенко, екипаж командирĕ, ССРС Верховнăй Совет депутачĕ, орденоносĕц В. С. Гризодубăвă тата самолђот штурманĕ аслă лейтенант-орденоносĕц М. М. Раскова.
А. Межуйĕвпа Б. Фишман фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

Октăбĕр уйавĕ умĕнхи ăмăрту

Ăмăрту сарăлсах пырать

СĔНТĔРВĂРРИ. (Телефон тăрăх). Районри предприйатисенче, йалсоветсенче, колхозсенче тата суту-илÿ организацисенче Октăбĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăрту сарăлсах пырать. Деткомиççин катка-пичке тăвакан савăтри рабочисем ăмăртăва хутшăннă хыççăн ĕç тухăçлăхне пĕрмайах ÿстерсе пыма тытăнчĕç. Савăт октăбĕр уйăх планне срукчен 105 процент тултарчĕ. Рабочи Бурков йулташ иртнĕ уйăхра нормăна 234 процент тултарса 1026 тенкĕ ĕçукçи илнĕ. Çавăн пекех Зимин, Чернышов йулташсем нормăна 200 процентран кайа мар тултарса ĕçлеççĕ.

Кушникăвă йалсоветĕнчи „Волна" колхозпа „Новая деревня" колхозсем ăмăртăва тухрĕç. Вĕсем октăберĕн 20-мĕш тĕлне государствă умĕнчи пур парăмсене те парса татма, 1939 çулшăн государствăна аш-какай тăратас плана 20 процентран кайа мар тултарма, каçалхи тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх октăберĕн 25-мĕш тĕлне валеççе пĕтерме пулнă. Халĕ икĕ колхозра та илнĕ обйазателствăсене пурнăçа кĕртессишĕн хĕрÿлĕ ĕç пырать.

Уйав умĕнхи ăмăртăва хутшăнса ĕçлесе чылай йалпосем лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Шуршăлти йалпо (председателĕ Белов йулташ) висçĕмĕш квартăлти таварçаврăнăш планне 159 процент, Амачкинăри йалпо (председателĕ Комбулăв йулташ) 104 процент ытла тултарнă. Ăмăрту халăх хуçалăхĕн ытти отрăçлисенче те сарăлсах пырать.

П. Сатур.

Строителствă ĕçĕ хăвăртланчĕ

ÇĔРПÿ. Çĕн Сала йалĕнчи електричĕствă станцине çак çулта ĕçе кĕртмеле. Халђхи вăхăтра ĕç пысăк хăвăртлăхпа пырать. Рабочисем станцăна Октăбер уйавĕччен туса пĕтерессишĕн социалисăмлă ăмăртăва вăйлатсах пыраççĕ. Р. Арсентйĕвă, А. Зуйĕвă, И. Иванова йулташсем кашни кунах 2 кубла метр çĕр чавас вырăнне 3,5 кубла метр чаваççĕ. Йулашки вăхăтра стаханăвла йухăм платниксем хушшинче те сарăлса пырать. А. Сотникăв, А. Куçмин, А. Матвейĕв, В. Иевдокимăв йулташсем кулленхи нормăна 135 процент тултарса ĕçлеççĕ.

С. Чернов.

Комсомолĕцсен примерлă ĕçĕ

Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан тир-сăран савăтĕнчи рабочисемпе работницăсем Октăбĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртура лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ.

Октăберĕн 11-мĕшĕнче хатĕрлекен цехра машинăпа ĕçлекен комсомолкă Скачкова йулташ нормăна 266,2 процент тултарчĕ. Çак кун Ленин йачĕпе тăракан бригадăри комсомолĕц Н. Павлăв йулташ та лайăх тĕслĕх кăтартрĕ, вăл атапушмак тĕпне лартас плана 200,5 процент, сăрланă çĕрте ĕçлекен Шатлайĕв йулташ 229,5 процент тултарчĕç.

И. Федăрăв.

Нормăна тултарманнисем çук

ÇĔМĔРЛЕ (Хамăр корр.). „Болђшевик" савăтра уйав умĕнхи ăмăрту массăлăн сарăлса пырать. Рабочисем, инженерлă-техниклă работниксем пĕр-пĕринпе ăмăртăва тухса, ĕç тухăçлăхне ÿстерессишĕн кĕрешеççĕ. Ăмăртса ĕçленипе савăт коллективĕ III-мĕш квартăлти плана екстракт кăларассипе 114,7 процент тултарчĕ. Продукци пахалăхĕ те лайăх.

4-мĕш квартăла кĕнĕ хыççăн рабочисем тата та пысăк ÿсĕмсем тума пуçларĕç. Коллектив хăйĕн умне „Дубитель" тресчĕн савăчĕсем хушшинчи ăмăртура мала тухса, куçса çÿрекен хĕрлĕ йалава илес задачăна лартрĕ. Халĕ савăтра нормăна тултарман рабочисем пачах та çук. Стаханăвĕцсемпе ударниксем нихăçанхинчен лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Çамрăксен бригадинчи выпаршчик Бойаркин йулташ тата 4-мĕш бригадăри выпаршчик Федăрăв йулташ нормăна 140-шер процент тултараççĕ. Рубиљшчик Йегорăв йулташ 146 процент, Куçмин 150 процент тултарать т. ыт. те. Иккĕмĕш бригадă (çменă маçтăрĕ Миронăв йулташ) октăберĕн малтанхи пилĕк кун хушшинче нормăна 105 процента йахăн тултарчĕ, октăберĕн 6-мĕшĕнче 125,6 процент пачĕ.

Савăтри профсойуз комитечĕн членĕ Шарин йулташ нормăна 180 процент тултарса пынă вăхăтрах хăйĕн опычĕсене çамрăк рабочисене Курасăвпа Хамынĕв йулташсене парать. Çавнашкалах профгруппорг Закађабин й. куллен икшер нормă тултарса ĕçлесе, хăйĕн ĕç меслечĕсемпе Фролов, Козлов тата Мартынăв йулташсене вĕрентет. Закађабин йулташ цехри пур рабочисене те ăмăртăва йавăçтарнă.

Н. Иваницкий.

Тимофейĕв бригадин ĕçĕсем

ТРАК. Вутланти „Хĕрлĕ йалав" промысла ертел членĕсем хушшинче стаханăвла йухăм вăйлансах пырать. Ертел стаханăвла йухăма вăйлатнипе III-мĕш квартăлти плана 193,9 процент тултарнă. Кунта нормăна 200—300 процент тултаракансем вуншарăн шутланаççĕ. Акă М. Матвейĕвă, К. Куçмин йулташсем висçĕмĕш квартăл планне 200 процент ытла тултарнă.

Аластаçсем пурте Октăбер уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă. Ăмăртура Тимофейĕв йулташ бригади малта пырать. Унăн бригадинче 87 çын, вĕсем пурте нормăна ытлашшипех тултараççĕ. Çулталăк планне Октăбĕр уйавĕ тĕлне тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

В. Иваншков.

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (бољшевиксен) Партин

ИСТОРИЙĔ

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиссийĕ редакциленĕ. *КĔСКЕ КУРС.* *ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.*

II СЫПĂК

РОÇÇИЙĂРИ СОЦИАЛ-ДЕМОКРАТЛА РАБОЧИ ПАРТИНЕ ТУСА ХУНИ. ПАРТИ ĂШĔНЧЕ БОЉШЕВИКСЕН ТАТА МЕЊШЕВИКСЕН ФРАКЦИЙĔСЕМ ПУÇЛАНСА КАЙНИ.

(1901—1904 ÇУЛСЕМ).

1. Роççийăра 1901—1904 çулсенче революцилĕ йухăм çĕкленни.

XIX-мĕш ĕмĕрĕн вĕçĕнче Йевропăра промышленнăçăн вăйлă кризисĕ пуçланса кайнă. Çав кризис часах Роççийăна та çавăрса илнĕ. Кризис пулнă 1900—1903 çулсенче 3 пин таран шултра тата вак предприйатисем хупăнса ларнă. 100 пин çын ытла рабочисене урама кăларса ывăтнă. Предприйатисенче йулнă рабочисен ĕç укçине нумай чакарнă. Унччен малтан рабочисем çине тарса економикăлла стачкăсем туса капиталиссенчен туртса илнĕ хăшпĕр уступкăсене хале ентĕ капиталиссем кайăла илнĕ.

Промышленнăç кризисĕ, еççĕрлĕх рабочисен йухăмне чарса лартман та, хавшатман та, калтах урăхла, рабочисен кĕрешĕвĕ ытларах та ытларах революциленсе пынă. Рабочисем економикăлла стачкăсенчен политикăлла стачкăсем тăвасси çине куçма тытăннă. Йулашкинчен, рабочисем демонстрацисем тума пуçлаççĕ, демократилĕ ирĕклĕхсем çинчен политикăлла требованисем кăларса тăратаççĕ, «тĕп пултăр патша самодержавийĕ» текен лозунг кăларса тăратаççĕ.

1901 çулта Петербургра Обуховăн çар саватĕнче майăн пĕрремĕшĕнче пулнă стачка рабочисемпе çарсем хушшинчи йунлă çапăçу пулса кайнă. Патшан хĕçпăшаллă çарĕсене хирĕç рабочисем чулсемпе тата тимĕр татăкĕсемпе çеç тăма пултарнă. Рабочисем пит хытă хирĕç тăнине пусарса лартнă. Ун хыççăн вара пит хайаррăн хĕсĕрлеме тытăннă: рабочисене 800 çынна йахăн арĕстленĕ, нумайĕшне тĕрмене хупса лартнă тата каторгăна йанă. Анчах Обухов саватĕнчи паттăрла оборона („Обуховская оборона“) Роççийăри рабочисене чылай революцилентерне, рабочисем хушшинче çав ĕçе камăллас хума çекленĕ.

1902 çулти март уйăхĕнче Батумри рабочисен пысăк забастовкисемпе демонстрацийĕсем пулса иртеççĕ, вĕсене Батумри социал-демократла комитет организациленĕ. Батумри демонстраци Закавказйĕри рабочисене тата хресченсен массисене хускатса йанă.

Çав 1902 çултах Дон-çи-Ростовра пысăк стачка пулса иртет. Малтан забастовкăна железнодорожниксем пуçласа йанă, часах вĕсемпе нумай савăтсенчи рабочисем пĕрлешнĕ. Стачка пур рабочисене те хускатса йанă, хула тулашĕнче пулса иртнĕ митингсене рабочисем темиçе кун хушши 30 пин çын таран пуханнă. Çав митингсенче социал-демократла прокламацисене йаспа вулана, оратарсем тухса калана. Полиципе казаксем рабочисен çав нумай йышлă пухăвĕсене салатса йама пултарайман. Полици темиçе рабочине вĕлерсен, тепĕр кунхине вĕсене пытарнă çĕре рабочисен пит пысăк демонстрацийĕ пуханнă. Патша правитĕлстви кӳршĕри хуласенчен çар пухса кана стачкăна пусарма пултарнă. Ростоври рабочисен кĕрешĕвне РСДРП Донской комитечĕ йĕртсе пынă.

1903 çулта стачкăсем тата ытларах пысăкланса кайнă. Çав çулта кăнтăрта массăлă политикăлă стачкăсем пулса иртеççĕ, вĕсем Закавказйĕне (Баку, Тифлис, Батум) тата Украинăн пысăк хулисене (Одесса, Кийев, Йекатеринослав) саралнă. Стачкăсем ытларах та ытларах хастарла, организацилĕ пулса пыраççĕ. Рабочи класăн унченхи выступленийĕсенчен расна рабочисен политикăлла кĕрешĕвĕ пур çĕрте те пекех социал-демократла комитетсем йĕртсе пыма пуçлана.

Роççийăри рабочи клас патша влаçне хирĕç революцилĕ кĕрешĕве кĕрешсе пына.

Рабочисен йухăмĕн влийанийĕ хресченсем йушшине саралнă. 1902 çулта çуркунне тата çулла Украинăра (Полтавăпа Харькăв кĕпĕрнисенче) тата Поволжйĕре хресченсен йухăмĕ саралса кайнă. Хресченсем помещиксен именисене тĕртсе çунтарнă, помещиксен çĕрĕсене турта-турта илнĕ, хайсем кураймаи земски начаљникĕсемпе помещиксене вĕлерне. Восстани тăвакан хресченсене, хирĕç çар вăйĕсем йанă, хресченсем çине пашалпа пенĕ, вĕсене çĕршерĕн арĕстленĕ, руководитĕлсемпе организатарсене тĕрмесене хупа-хупа лартна, çапах та хресченсен революцилĕ йухăмĕ малалах ӳссе пына.

Рабочисемпе хресченсен революцилĕ выступленийĕсем Роççийăра революци хатĕрленсе пынине, çывхарса килнине кăтартна.

Рабочисен революцилĕ кĕрешĕвĕн влийанийĕпе студентсен оппозицилĕ йухăмĕ те вăйланат́. Студентсен демонстрацийĕсемпе забастовкисем çине ответлесе правитĕлства университетсене хупса лартна, çĕршер студентсене тыта-тыта тĕрмесене хупнă тата, йулашкинчен, пăхăнман студентсене салтака парассине шухăшласа кăларна. Çакна хирĕç ответлесе пур асла шкулсенче вĕренекенсем те 1901—1902 çулти хĕлле мĕнпур студентсен стачкине организациленĕ. Ку стачкăна 30 пин çын таран хутшăнна.

Рабочисемпе хресченсен революцилĕ йухăмĕ тата уйрăмăнах студентсене хĕсĕрлени земствă текеннисенче ларна либераљнăй буржуасемпе либераљнăй помещиксене те хускатнă, вĕсене хăйсен ывăлĕсене-студентсене хĕсĕрленĕ патша правитĕлстви „иртĕннисене“ хирĕç „протеслесе“ сасă партарна.

Земски либералсен тĕрекĕн тĕп пункчĕсем земски управăсем пулса тăна. Земски управăсем тесе управленин вырăнти органĕсене калана, вĕсем йалти халăха тивекен вырăнти ĕçсене (çулйĕр хывасси, пуљницасемпе шкулсем лартасси) кăна туса пына. Либераљнăй помещиксем земски управăсенче чылайах палла вырăн йышăнса тăна. Вĕсем либераљнăй буржуасемпе çывăх çыханса тăнă, вĕсемпе пĕрлешĕнсе кайнăпа пĕрех пулнă, мĕншĕн тесен вĕсем хăйсен именийĕсенче çурмакрепостной хуçалăхран капиталисăмлă хуçалăха, ытларах уса кӳрекен хуçалăха, куçма пуçланă. Либералсен çак икĕ группи те, паллах, патша правитĕлствишĕн тăнă, анчах вĕсем патша йĕрки „иртĕннисене“ хирĕç пулнă, шăпах çав „иртĕннисем“ революцилĕ йухăма вăйлатма пултарасси çинчен хăрана. Патша йĕрки „иртĕннисене“ хăраса, вĕсем тата ытларах революцирен хăрана. Патша йĕрки „иртĕннисене“ хирĕç протестлесе, либералсем икĕ тĕллев тытнă: пĕрремĕшĕнчен, патшана „тăн парасшăн“ пулнă, иккĕмĕшĕнчен,—хăйсем çине патша йĕркине „пит килĕшмен пек“ кăтартакан маска тăхăнасшăн, халăх умĕнче шанăçа кĕресшĕн, халăха йе халăхăн пĕр пайне революцирен уйăрасшăн тата çапла тунипе революцине вăйсăрлатасшăн пулнă.

Паллах, земски либералсен йухăмĕ патша йĕркишĕн нимĕн те хăрушă пулман, анчах вăл çапах та патша йĕркин „ĕмĕрхи“ тĕрекĕсем шанчăклах маррине кăтартаканĕ пулнă.

Земски либералсен йухăмĕ 1902 çулта „Освобождение“ йатлă буржуалă группăна организацилесси патне илсе çитерне, çав группă Роççийăри пулас буржуалă тĕп партин—кадетсен партийĕн чăмарĕ пулнă.

Çĕршыв тăрăх рабочисемпе хресченсен йухăмĕ ытларах та ытларах хайар йухăмпа саралса пынине курса, патша йĕрки революцилĕ йухăма чарма пур майсемпе те тăрăшат́. Рабочисен стачкисемпе демонстрацийĕсене хирĕç час та часах çар вăйĕпе уса кураççĕ, патша правитĕлстви рабочисемпе хресченсен выступленийĕсем çине йаланах пуљăпа тата нагайкăпа ответлет, тĕрмесемпе ссылкăсем тулса лараççĕ.

Хĕсĕрлессине вăйлатнипе пĕрлех, патша правитĕлстви рабочисене революцилĕ йухăмран парса йама ытти „çаварнăçуларах“ ĕçсене, хĕсĕрлессинчен урăхла йышши ĕçсене, тума пăхат́. Рабочисен суйа, жандармсемпе полицисен аллинче тăракан организацийĕсене тума хăтланаççĕ. Çав организацисене унчухне „полицейский социалисăм“ организацисем, йе зубатăвла (рабочисен çав полицейский организацисене тунă жандармери полковникĕн Зубатăвăн хушамачĕпе) организацисем, тенĕ. Патша охранки хăйĕн агĕнчĕсем урлă рабочисене вĕсен економикăлă требованийĕсене патша правитĕлстви хăйех пурнăçа кĕртессинче пулăшма хатĕр, тесе ĕнентерме тăрăшнă. „Патша хăй рабочисем майлă тăрат́ пулсан, мĕне кирлĕ-ха политикăпа аппаланни, мĕне кирлĕ-ха революци туни“,—тенĕ зубатăвĕçсем рабочисене. Зубатăвĕçсем хăшпĕр хуласенче хăйсен организацийĕсене тунă. Зубатăвла организацисен образецĕпе тата çав тĕллевпех 1904 çулта Гапон поп „Собрание русских фабрично-заводских рабочих Петербурга“ йатлă организаци тунă.

Анчах патша охранки рабочисен йухăмне хăйне пăхăнтарма пăхни ăнăçлă пулман. Патша правитĕлстви çавăн пек ĕçсем тунипе рабочисен ӳссе пыракан йухăмне чарса лартма пултарайман. Рабочи класăн ӳссе пыракан революцилĕ йухăмĕ хăйĕн çулĕ çинчен çав полицейский организацисене шăлса тăкнă.

2. Марксисла парти тăвассин ленинла планĕ. „Економиссен“ оппортунисăмĕ. „Искра“ хаçат ленинла планшăн кĕрешни. Ленин çырнă „Что делать?“ кĕнеке. Марксисла партин идеологилĕ никĕсĕсем.

1898 çулта Роççийăри социал-демократла партин I-мĕш сийесĕ, парти туса хуни çинчен пĕлтернĕ сийесĕ, пулса иртнĕ пулин те, партине çапах та тăвайман-ха. Парти программине уставĕ пулман. Партин I-мĕш сийесĕнче суйланă Тĕп Комитетне арĕстленĕ, ăна вара çĕнĕрен урăх тăваймаи, мĕншĕн тесен ăна çĕнĕрен тума никам та пулман. Уйтан та ытларах, I-мĕш сийес хыççăн партин идейăлă сапаланчăклăхĕ тата организацилĕ сапаланчăклăхĕ татах та вăйланнă.

1884—1894 çулсем народничествăна çĕнтерне тата социал-демократине идейă тĕлĕшĕнче хатĕрленĕ тапхăр пулнă пулсан, 1894—1898 çулсем—уйрăм марксисла организацисенчен, чăнах та, ăнăçлă пулман пулин те, социал-демократла парти тума тытăнса пăхнă тапхăр пулнă пулсан, 1898 çул хыççăнхи тапхăр вара идейăпа организаци тĕлĕшĕнчен партире йĕркесĕрлĕх вăйланнă тапхăр пулса тăна. Марксисăм народничествăна çĕнтерни тата рабочи класăн революцилĕ выступленийĕсем, марксиссен тĕрĕслĕхне кăтартса панăскерсем, революцилĕ çамрăксем марксисăма кăмăлласине вăйлатна. Марксисăм мода пулса тăна. Çакă вăл ак мĕн патне илсе пына: марксисла организацисене интеллигенци хушшинчен тухна революцилĕ çамрăксен массисем нумайăн кĕрсе тулна; вĕсем теори тĕлĕшпе вăйсăр, организаципе политика тĕлĕшпе опытсăр пулнă; марксисăм çинчен вĕсем, унчухнехи „легаљнăй марксиссем“ пичетре оппортунисла çырса тултарнисем тăрăх кăна пĕлнĕ пирки, тĕксĕмĕн çеç, нумай чухне тĕрĕс мар ăнланнă. Çакăн пек пулни марксисла организацисен теорилĕ тата политикăлă çӳлĕшĕ чакасси патне, унта „легаљнăй марксисла“ оппортунисла шухăш-кăмăлсем илсе кĕресси патне, идейăлă сапаланчăклăх, политикăлă тĕрексĕрлĕх тата организацилĕ йĕркесĕрлĕх вăйланасси патне илсе пына.

Рабочисен йухăмĕ çĕкленсе пыни тата революци питех çывăх пулни рабочи класăн революцилле йухăма йертсе пыма пултаракан пĕрлĕхлĕ централизацилĕ партине тума ыйтнă. Анчах партин вырăнсенчи органĕсен, вырăнсенчи комитетсен, группăсемпе кружоксен лару-тăравĕ çав тери аван мар пулнă пирки, вĕсен организаци тĕлĕшĕнчи пĕтĕçӳсĕрлĕхĕ тата вĕсем идейă тĕлĕшпе пĕр шухăшлă марри ытла та пысăк пулнă пирки, çавнашкал партине тăвас задачă питех те йăвăр пулнă.

Патша йĕрки организацисен рĕтĕнчен чи лайăх работниксене тăпăлтарса тăнă, вĕсене ссылкăна, тĕрмесене, каторгăна йарса пынă, анчах йăвăрлăхсем партине патша йĕрки хайаррăн хĕсĕрленин вучĕ айĕнче тума тивнинче кăна пулман. Йăвăрлăхсем тата çакăнта пулнă: вырăнсенчи комитетсен тата вĕсен работникĕсен чылай пысăк пайĕ, хăйсен вырăнти практикăлă вак ĕçĕсĕр пуçне, урăх ним те пĕлесшĕн пулман, партин организацилĕ тата идейăлă пĕрлĕх пулманнин сийенне ăнланман, партин сапаланчăклăхне, партири идейăлă йĕркесĕрлĕхе хăнăхнă; пĕрлĕхлĕ централизацилĕ партисĕрех пурăнма пулат́, тесе шутлана.

Централизацилĕ парти тăвас тесен, вырăнсенчи органсен çак кайа йулнăлăхне, вĕсем киввипе килĕшсе пурăннине тата вĕсен хĕсĕк практицисăмне пĕтермеле пулнă.

Анчах çакă вăл пурте мар-ха. Партире çавнашкал çынсен нумайах йышлă ушкăнĕ пулнă: вĕсен хăйсен пичет органĕсем—Роççийăра „Рабочая мысль“, йут çĕршывра „Рабочее дело“ пулнă; çак ушкăн партири организацилĕ сапаланчăклăха тата идейăлă сапаланчăклăха теори йенчен тӳрре кăларма тăрăшнă, нумай чухне вĕсене мухтаса йурланă; рабочи класăн пĕрлĕхлĕ, централизацилĕ, политикăлă партине тăвас задачă вăл кирлĕ мар, шухăшласа каларнă задачă пулса тăрат́, тесе шутлана.

Çаксем вĕсем—„економиссем“ тата вĕсен хыççăн кайакансем пулнă.

Пролетариатăн пĕрлĕхлĕ политикăлă партине тăвас тесен, нимĕнрен малтан „економиссене“ çапса çĕмĕрмеле пулнă.

Çак задачăсене пурнăçа кĕртме тата рабочи класăн партине тума Ленин тытăнна та ĕнтĕ.

Рабочи класăн пĕрлĕхлĕ партине тума мĕнрен тытăнмала,—текен ыйту пирки тĕрлĕ шухăшсем пулнă. Хăшпĕрисем çапла шутлана: парти тăвассине партин II-мĕш сийесне пухнинчен пуçламала, вăл вара вырăнсенчи организацисене пĕрлештерсе парти тăвĕ. Ленин çакнашкал шухăша хирĕç пулнă. Вăл çакăн пек шутлана: сийес пухиччен малтан, партин тĕллевĕсемпе задачисем çинчен тăракан ыйтăва палăртас пулат́, мĕнле парти тăвас тенине пĕлес пулат́, „економиссенчен“ идейă тĕлĕшпе уйăрăлас пулат́, парти тĕллевĕсемпе задачисем пирки икĕ тĕрлĕ шухăш,—„економиссен“ шухăшĕ тата революцилĕ социал-демократсен шухăшĕ,—пурри çинчен партине тӳррĕн те уççăн каласа парас пулат́, „економиссем“ хăйсен пичет органĕсенче хăйсен шухăшĕсемшĕн пропагандă тунă пекех, революцилĕ социал-демократи шухăшĕсемшĕн те пичетре сарлакан пропагандă туса пырас пулат́, вырăнсенчи организацисене çак икĕ йухăмран пĕрне ăнланулăн суйласа илме май парас пулат́,—çак малтан тума кирлĕ ĕçсене туса çитерсен кăна,—парти сийесне пухма пулат́.

Ленин тӳрех калана:

«Пĕрлешиччен малтан, тата пĕрлешес тесен—малтан татăклăн та паллăн уйрăлса тăни кирлĕ» (**Ленин**, т. IV, стр. 378).

Çавăнпа ĕнтĕ Ленин çапла шутлана: рабочи класăн политикăлă партине тăвас ĕçе пĕтĕм вырăссен политикăлă паттăр хаçатне организацилессинчен тытăнма кирлĕ, вăл хаçатăн революцилĕ социал-демократи шухăшĕсемшĕн пропагандăпа агитаци туса пымала,—çавнашкал хаçата тăвасси парти тăвас ĕçĕн пĕрремĕш утăмĕ пулмала.

Ленин хăйĕн «С чего начать?» текен паллă стат́йинче парти тăвас ĕçĕн конкретлă планне палăртса хунă, кайарахпа вăл плана хăйĕн «Что делать?» йатлă чаплă кĕнекинче тĕплĕн çырса панă.

„Пирĕн шухăшпа, тенĕ Ленин çав стат́йара, ĕçĕн пуçламăшĕ, хамăра кирлĕ организацине*) тăвас çĕрти пирвайхи практикăлă утăм, йулашкинчен, тĕп йĕр, —çав тĕп йĕре тытса пырса епĕр организацине пĕрмайах аталантарса, тарăнлатса тата сарса пыма пултарнă пулăттăмăр,—пĕтĕм вырăссен политикăлă хаçатне кăларасси пулса тăмала... Унсăрăн принцип тĕлĕшĕнчен çирĕп тата пурйенлĕ пропагандăпа агитаци ĕçне тăтăшах туса пыма май çук, çав ĕçе тăтăшах туса пырасси социал-демократин пĕтĕмĕшрĕн йаланхи тата тĕп задачи, уйрăмăнах—халљхи вăхăтăн, халăхăн питех те сарлака сийĕсенче политикăпа тата социалисăм ыйтăвĕсемпе интересленни вăраннă чухнехи вăхăтăн, кирлĕ задачи пулса тăрат́“ (**Ленин**, т. IV, стр. 110).

*) Сăмах парти [illegible] çинчен пырат́.—Ред.

Ленин: çакнашкал хаçат идейă тĕлĕшпе пĕтĕçмели хатĕр кăна мар, вырăнсенчи организацисене партине пĕрлештермели хатĕр те пулса тăрĕ, тесе шутлана. Çак хаçатăн вырăнсенчи организацисен представитĕлĕсем пулса тăракан агĕнчĕсемпе корреспонденчĕсен йышĕ партин кĕлетки пулса тăмала, ун таврапа парти организаци тĕлĕшпе пухăнмала. Мĕншĕн тесен, тенĕ Ленин, „хаçат вăл—коллективлă пропагандис тата коллективлă агитатăр кăна мар, çавăн пекех тата коллективлă органазатăр та“.

„Агĕнтсен çав йышĕ, тенĕ Ленин çак стат́йарах, шăпах пире кирлĕ организацин кĕлетки пулса тăрĕ: çав организаци хăйĕн ĕçĕпе пĕтĕм çĕршыва çавăрса илме çителĕклĕ таран сарлака та тĕрлĕ йенлĕ пулмала; кирек мĕнле лару-тăрура та, кирек мĕнле „çаврăнусенче“ те тата кĕтменлĕхсенче те хăйĕн ĕçне ним пăрăнмасăр тума çителĕклĕ таран çирĕп пулмала; пĕр йенчен, вăйлăрах тăшмана хирĕç, вăл хăйĕн пĕтĕм вăйне пĕр çĕре пухнă вăхăтра, уçă уйра çапăçассинчен пăрăнма, тепĕр йенчен, çав тăшманăн çаврăнăçусăрлăхĕпе уса курса, ăна вăл кĕтмен çĕртен тата кĕтмен вăхăтра тапăнма çителĕклĕ таран çивĕч пулмала“ (**Ленин**, т. IV, стр. 112).

Çавăн пек пулмала „Искра“ хаçат.

Чăнах та, „Искра“ шăпах çавăн пек пĕтĕм вырăссен политикăлă хаçачĕ пулнă та, вăл партин идейăлă тата организацилĕ пĕтĕçӳлĕхне хатĕрленĕ.

Партин хăйĕн стройенине тата составне илес пулсан, Ленин парти икĕ пайран тăмала, тесе шутлана: а) йалан йĕртсе пыракан кадрти работниксен, пĕчĕк ушкăнĕнчен тăмала, кунта пуринчен ытла професçилĕ революционерсем, урăхла каласан, парти ĕçĕсĕр пуçне, ытти мĕнпур ĕçсенчен ирĕклĕ работниксем кĕмеле, вĕсен кирлĕ минимум таран теорилĕ пĕлӳсем, политикăлă опыт, организацилĕ хăнăхусем тата патша полицине хирĕç кĕрешмели искусствă, полицирен пытанмали искусствă пулмала тата б) партин вырăнсенчи организацийĕсен сарлака йышĕнчен, вĕсене çĕршер пин ĕççыннисем кăмăлласа пулăшса тăракан нумай йышлă парти членĕсен массисенчен тăмала.

„Епĕ çирĕплетсех калатăп, тесе çырнă Ленин, (1) пĕр революцилĕ йухăм та руководитĕлсен тĕреклĕ, ĕççене сыпăнтарса пырассине сыхласа усракан организацийĕсĕр çирĕп пулма пултараймаст́; (2) кĕрешĕве хăй тĕллĕн хутшăнса пыракан массă мĕн чухлĕ йышлăрах... çавнашкал организаци те çавăн чухлĕ кирлĕрех тата вăл организаци çавăн чухлĕ çирĕпрех пулмала... (3) çавнашкал организаци пуринчен ытла революцилĕ ĕçе хăйсен професçийĕ туса ĕçлекен çынсенчен тытăнса тăмала; (4) самодержавилĕ çĕршывра çавнашкал организацине епĕр мĕн чухлĕ **ансăрлатăпăр**, ăна революцилĕ ĕçе професçи туса ĕçлекен тата политикăлă полицине хирĕç кĕрешес искусствăра професçилĕ хатĕрленсе çитнĕ членсем кăна тăмала таран ансăрлатăпăр пулсан, çак организацине „тытса пĕтерме“ те çавăн чухлех йăвăртарах пулĕ, вара—(5)—рабочи класра та, обшчĕствăн ытти классенче те йухăма хутшăнса, унта активлă ĕçлеме пултаракан çынсен йышĕ çавăн чухлĕ **нумайтарах** пулĕ“ (**Ленин**, т. IV, стр. 456).

Çав тăвакан партин характĕрне тата унăн рабочи клас тĕлĕшĕнчи рољне, çавнашкалах тата унăн тĕллевĕсемпе задачисене илес пулсан, Ленин çакăн пек шутлана: парти рабочи класăн малта пыракан отрйачĕ пулмала, вăл рабочисен йухăмне йертсе пыракан, пролетариатăн класлă кĕрешӳне пĕрлештерсе çул кăтартса пыракан вăй пулмала. Партин чи вĕçри тĕллевĕ—капиталисăма сирпĕтсе антарасси тата социалисăм туса хурасси. Чи çывăхри тĕллев, патша йĕркине сирпĕтсе антарасси тата демократилĕ йĕркесем тăвасси пулнă. Капиталисăма сирпĕтсе антарассине, малтан патша йĕркине сирпĕтсе антармасăр тума май çук пирки, çавăнта халљхи вăхăтра партин тĕп задачи, патша йĕркине хирĕç кĕрешĕве рабочи класа çĕклесси, пĕтĕм халăха çĕклесси, патша йĕркине хирĕç халăхăн революцилле йухăмне сарса йарасси тата социалисăм çулĕ çинче пĕрремĕш тата питех те пысăк чăрмав пулса тăракан патша йĕркине сирпĕтсе антарасси пулнă.

„Истори халĕ пирĕн ума, тенĕ Ленин, чи çывăхри задачă лартрĕ, вăл задачă ытти кирек те хăш çĕршыври пролетариатăн мĕнпур **çывăхри** задачисенчен те **нумай революцилĕрех** задачă пулса тăрат́. Çак задачăна пурнăçа кĕртни, Йевропăри реакцин чи хăватлă тĕрекне кăна мар, çавăн пекех тата (халĕ епĕр калама пултаратпăр) Азири реакцин хăватлă тĕрекне те çапса салатни, вырăс пролетариатне пĕтĕм тĕнчери революцилĕ пролетариатăн авангарчĕ туса хунă пулĕччĕ“ (**Ленин**, т. IV, стр. 382).

Тата малала:

„Пирĕн çакна асра тытмала: уйрăм требованисемшĕн правитĕлствăна хирĕç кĕрешни, уйрăм уступкăсем кĕрешсе илни, вăл—тăшмана хирĕç пĕчĕк çапăçусем туни кăна, вăл—форпостсенчи пĕчĕк тытăçусем кăна, татăклă тытăçу малта-ха. **Пирĕн** умра тăшман крепăçĕ хăйĕн пĕтĕм вăйĕпе тăрат́, çав крепăçран пирĕн çине чи лайăх кĕрешекенсене пĕтерекен йĕтресемпе пуљăсене çăмăр пек сапаççĕ. Пирĕн çав крепăçа çĕнсе илмеле, епĕр, вăранакан пролетариатăн пĕтĕм вăйĕсене вырăс революционерĕсен пĕтĕм вăйĕсемпе пĕр партине пĕрлештерсен, ăна çĕнсе илетпĕрех, çав парти йĕннеле Роççийăра пуранакан чĕрĕ те тӳрĕ çынсем пурте туртăнĕç. Унчухне тин вара вырăс рабочийĕ революционер Петр Алексейĕв: „мĕлйуншер рабочи халăхăн тĕреклĕ алли çĕкленĕ те, салтак штыкĕсемпе хӳтĕленсе тăракан деспотисăм майкăчĕ тусан пек салanса кайĕ!“ тесе пророкла каланă асла сăмахсем ĕçе кĕрĕç“ (**Ленин**, т. IV, стр. 59).

Çакăн пек пулнă ĕнтĕ Роççийăри патша самодержавин условисенче рабочи класăн партине тумали ленинла план.

„Економиссем“ çийĕнчех ленинла плана хирĕç кĕрешме тытăннă.

„Економиссем“ каланă: патша йĕркине хирĕç пĕтĕмĕшле политикăлă кĕрешӳ туса пырасси мĕнпур классен ĕçĕ, пуринчен малтан,—буржуази ĕçĕ пулса тăрат́, çавăнпа та вăл рабочи класшăн пысăк интереслă мар, мĕншĕн тесен рабочисен тĕп интересĕ—ĕç укçине хăпартассишĕн, ĕç условисене лайăхлатассишĕн тата ыттисемшĕн хуçасене хирĕç економикăлă кĕрешӳ туса пырасси пулат́. Çавăнпа та социал-демократсем хăйсен çывăхри тĕп задачи вырăнне патша йĕркине хирĕç политикăлă кĕрешӳ туса пырассине мар, самодержавине сирпĕтсе антарассине мар—„хуçасене тата правитĕлствăна хирĕç рабочисен економикăлă кĕрешӳне организацилессине лартмала“, тенĕ; правитĕлствăна хирĕç туса пыракан економикăлă кĕрешӳ тесе, вĕсем хапрăк-савăт законодатĕлствине лайăхлатассишĕн кĕрешессине ăнланнă. „Економиссем“; çапла майпа „економикăлă кĕрешĕве хăйне политикăлă характĕрлă тума“ пулĕччĕ, тесе ĕнентерме хăтланнă.

„Економиссем“ рабочи класа политикăлă парти кирлине хирĕç уççăн тăма хăйайман ĕнтĕ. Анчах вĕсем парти рабочисен йухăмне йĕртсе пыракан вăй пулмала мар, рабочи класăн стихийлă йухăмне унăн хутшăнмала мар, пушшех те—унăн вăл йухăма йертсе пымала мар, çав йухăм хыççăн пымала, ăна вĕренсе ун тăрăх уроксем тумала, тесе шутлана.

„Економиссем“, малала, çапла калана: рабочисен йухăмĕнче ăстăнлă елементăн ролĕ, социалисăмлă ăстăнăн, социалисăмлă теорийĕн организацилесе çул кăтартса пыракан ролĕ—пĕчĕккĕ, йе пĕчĕккĕпе пĕрех; социал-демократин рабочисене социалисăмлă ăстăн çӳлĕшне çĕклемеле мар, йăлтах урăхла, унăн хăйĕн рабочи класри вăтам йе тата та кайарах йулнă сийсен ăстăнĕпе майлашăнса, вĕсен виçи таран анса пымала; социал-демократин рабочи класа социалисăмлă ăстăн кĕртсе пымала мар, рабочи класăн стихийлă хăйĕн йухăмĕ вăйĕсемпе хăйех социалисăмлă ăстăн туса хатĕрличчен кĕтсе тăмала.

Ленинăн парти тумали организацилĕ планне илес пулсан, ăна вĕсем стихийлă йухăма ирĕксĕрлени пулнă пек шутлана.

Малали 3-мĕш страницăра

МАЛАЛЛИ

Ленин „Искра" хаçатра, уйрăмăнах, хăйĕн питех те чаплă „Что делать?" ятлă кĕнекинче, „економиссен" çак оппортунисла философине хирĕç питех те вăйлăн тухнă, вăл философине ним хăвармичченех çапса салатнă.

1) Ленин çакна кăтартса панă: рабочи класа патша йеркине хирĕç пыракан пĕтĕмĕшле политикăлă кĕрешӳрен пăрса йани, ун умне, хуçасене те, правительствăна та çаплипех хăварса, хуçасене тата правительствăна хирĕç економикăлă кĕрешӳ туса пырас задачă çеç лартни — рабочисене ĕмĕрлĕхех чуралăхра пурăнма тĕртнине пĕлтерет. Рабочисем хуçасене тата правительствăна хирĕç туса пыракан економикăлă кĕрешӳ вăл — ĕç вăйне капиталиссене лайăхрах условипе сутассишĕн туса пыракан тредйунионисла кĕрешӳ пулса тăрать, анчах рабочисем хăйсен ĕç вăйне капиталиссене лайăхрах условипе сутассишĕн кăна мар кĕрешессĕн, вĕсем çав хăйсен ĕç вăйне капиталиссене сутма тата експлуатацире пурăнма тĕртсе тăракан капиталисла системăна хăйне пĕтерессишĕн те кĕрешессĕн. Анчах рабочисен йухăмĕн çулĕ çинче патша влаçĕ, капиталисăмăн сăнчăрти йытти пур чухне, — рабочисем капиталисăма хирĕç кĕрешӳ сарса пыраймаççĕ, социалисăмшăн кĕрешӳ туса пыраймаççĕ. Çавăнпа та партипе рабочи класăн çывăхри задачи çав патша влаçне çул çинчен сирсе пăрахасси, çапла тунипе социалисăм валĵĵи çул уçса хурасси пулса тăрать.

2) Ленин çакна кăтартса панă: рабочисен йухăмĕн стихийлă процесне мухтани тата партин йертйе пырас роĵне, ăна событисене çырса тăракан регистратăр ролĕ патне çитерсе тăратса, йышăнманни вăл — „хвостисăм" шухăшне сарнине, партирен стихийлă процесс хӳри, йухăмăн стихийла процесĕ çине пăхса тăма çеç, самоток çине шанса тăма çеç пултаракан пассивлă вăй туса хурас шухăша сарнине пĕлтерет. Çакнашкал шухăша сарни вăл — ĕçе партине пĕтерес майлă туса пынине пĕлтерет, урăхла каласан, вăл рабочи класа партисĕр тăратса хăварассине, урăхла каласан, рабочи класа хĕçпăшалсăр тăратса хăварассине пĕлтерет. Анчах рабочи клас умĕнче çакнашкал тăшмансем — кĕрешĕвĕн мĕнпур хатĕрĕсемпе хĕçпăшалланнă патша влаçĕ пек тата халĵхи вăхăтри майсемпе организациленнĕ, рабочи класа хирĕç кĕрешессине йертсе пыракан партилĕ буржуази пек тăшмансем тăнă чухне, рабочи класа хĕçпăшалсăр тăратса хăварни вăл — рабочи класа сутнине пĕлтерет.

3) Ленин çакна кăтартса панă: рабочисен йухăмĕн стихийлăхне мала хуни тата ăстăнлăх роĵне пĕчĕклетсе кăтартни социалисăмлă ăстăн, социалисăмлă теори роĵне пĕчĕклетсе кăтартни вăл, — пĕрремĕшĕнчен, ăстăнлăх патне, çутă патне туртăннă пек, туртăнакан рабочисенчен мăшкăланине, иккĕмĕшĕнчен, парти куçĕ умĕнче теорине, урăхла каласан, партиĵе халĵхи ĕççене пĕлме тата пулас ĕççене малтанах курма пулăшакан хатĕре, хакран кăларнине тата, виççĕмĕшĕнчен, пĕтĕмпех те татăклăнах оппортунисăм лачакине кĕрсе ӳкессине пĕлтерет.

„Револĵуцилĕ теорисĕр, тенĕ Ленин, револĵуцилĕ йухăм та пулма пултараймасть... Малта пыракан борецăн роĵне малта тăракан теори тăрăх ĕçлекен парти кăна пурнăçа кĕртме пултарать" (Ленин, т. IV, стр. 380).

4) Ленин çакна кăтартса панă: „економиссем" — социалисăмлă идеологи рабочи класăн стихийлă йухăмĕнчен çитĕнсе тухма пултарать тенипе рабочи класа улталаççĕ, мĕншĕн тесен, чăннипе, социалисăмлă идеологи стихийлă йухăмран мар, наукăран çитĕнсе тухать. „Економиссем" рабочи клас хушшине социалисăмлă ăстăн илсе кĕрессине йышăнманнипе буржуалă идеологине çул уçса параççĕ, буржуалă идеологине рабочи клас хушшине илсе кĕртессине, вăл рабочи класра çирĕпленсе ларассине çăмăллатаççĕ, — çапла вара рабочисен йухăмне социалисăмпа пĕрлештерес идейăна пĕтереççĕ, буржуазипе пулăшаççĕ.

„Рабочисен йухăмĕн стихийлăхне, тенĕ Ленин, **кирек мĕнле** мала хуни те „ăстăнлă елементăн" роĵне, социал-демократи роĵне кирек мĕнле хакламанни те, — **хакламан çынĕ хăй çакна тăвасшăн-и йе тăвасшăн мар, вăл пурпĕрех,** — çавăнпа пĕрлех **вăл рабочисем хушшинче буржуалă идеологи влийанийĕ вăйланнине пĕлтерет**" (**Ленин**, т. IV, стр. 390).

Малала тата:

„Ыйту **çапла кăна** тăрать: буржуалă йе социалисăмлă идеологи. Варри çук кунта... Çавăнпа та социалисăмлă идеологине **кирек мĕнле** хакламанни те, унран **кирек мĕнле пăрăнни** те çавăнпа пĕрлех, буржуалă идеологи вăйланнине пĕлтерет" (**Ленин**, т. IV, стр. 391—392).

5) „Економиссен" пĕтĕм çак йанăшĕсем çинчен итог туса, Ленин çакăн пек вывăд патне пынă: „економиссем" рабочи класа капиталисăмран ирĕке кăларакан социаллă револĵуци партине мар, капиталисăм пуçпулса тăрассине сыхланса йулма май паракан „социаллă реформăсен" партине тăвасшăн пулнă, „економиссем" çавăн пирки пролетариатăн тĕп интересĕсене сутакан реформиссĕм пулса тăраççĕ.

6) Ленин, йулашкинчен, çакна кăтартса панă: Российăри „економисăм" вăл — ăнсăртран пулнă йапала мар, „економиссем" рабочи клас хушшине буржуалă влийани саракансем пулса тăраççĕ, вĕсен Хĕвеланăç Йевропăри социал-демократла партисенче сойузниксем пур, çав сойузниксем — ревизиониссем, Бернштейн оппортунист майлă çынсем пулса тăраççĕ. Хĕвеланăçĕнче социал-демократсем хушшинче ытларах та ытларах оппортунисла йухăм вăйланса пыма тытăннă, вăл Маркса „критиклес ирĕк" йалавĕпе витĕнсе тухнă, ревизи тума, урăхла каласан, Маркс вĕрентĕвне тепĕр хут пăхса тухма ыйтнă (çакăнтан вара „ревизионисăм" йат пуçланнă), револĵуцине, социалисăма, пролетариат диктатурине пăрахăçлама ыйтнă. Ленин вырăс „економиссем" те çавнашкал çулйĕрех револĵуцилĕ кĕрешĕве, социалисăма, пролетариат диктатурине пăрахăçлас çулйĕрех тытса пынине кăтартса панă.

Çакнашкал ĕнтĕ Ленин „Что делать?" кĕнекере çырса тăранлатнă тĕп теорилĕ положенисем.

„Что делать?" кĕнекене сарни çакăн патне илсе пынă: вăл пичетленсе тухсан тепĕр çултанах (ăна 1902 çулти март уйăхĕнче пичетлĕсе каларнă), Российăри социал-демократла партин II-мĕш сйесĕ тĕлне „економисăмăн" идейăлă позицийĕсенчен кăмăла кӳрентерекен асаилӳ çеç тăрса йулнă, „економист" тенĕ йата вара парти работникĕсен нумай пайĕ тăрахлани вырăнне хурса йышăнма пуçланă.

Çака вăл „економисăма" идейа тĕлĕшĕнчен пĕтĕмпех аркатса такни пулнă, оппортунисăма, хвостисăма, самотока аркатса такни пулнă.

Анчах Ленинăн „Что делать?" кĕнекин пĕлтерĕшĕ ку çеç мар-ха.

„Что делать?" кĕнекен историлĕ пĕлтерĕшĕ Ленин çав чапла кĕнекере çаксене тунинче пулать:

1) Марксисла шухăшăн историнче чи малтанхи хут оппортунисăмăн идейăлă пуçламăшĕсене тымарĕсем таранах уçса кăтартнă, оппортунисăмăн пуçламăшĕсем, нимĕнрен малтан, рабочисен йухăмĕн стихийлăхне мала хунинче тата социалисăмлă ăстăнăн рабочи йухăмри роĵне пĕчĕклетнинче пулнине кăтартса панă;

2) Теорин, ăстăнлăхăн, рабочисен стихийлă йухăмне револĵуцилентерсе тата йертсе пыракан вăй пулса тăракан партин пĕлтерĕшне çӳле çĕкленĕ;

3) Марксисăмăн тĕп положенийĕ, марксисла парти вăл — рабочисен йухăмĕ социалисăмпа пĕрлешсе тăни пулать текенскерне, питех те тĕплĕн çирĕплетсе панă;

4) Марксисла партин идеологилĕ никĕсĕсене генилле туса хатĕрленĕ.

„Что делать?" кĕнекере çырса панă теорилĕ положенисем кайран болĵшевикла партин идеологийĕн никĕсĕ пулса тăнă.

Теорин çакнашкал пуйанлăхĕпе уса курса, „Искра" хаçат парти тавас ĕçĕн ленинла планĕшĕн, парти вăйĕсене пухассишĕн, партин II-мĕш сйесĕшĕн, револĵуцилĕ социал-демократишĕн, „економиссене" хирĕç, пур тĕрлĕ тата пур йышши оппортуниссене хирĕç, ревизиониссене хирĕç анлă кампани сарса йама пултарнă, чăнахах та сарса йанă.

„Искра" хаçатăн питех те кирлĕ ĕçĕ парти программин пройектне хатĕрлесси пулнă. Пуриншĕн те паллă, рабочи партин программи вăл — рабочи класăн тĕллевĕсемпе задачисем çинчен кĕскен çырса научнăй формулировка пани пулса тăрать. Программа пролетариатăн револĵуцилĕ йухăмĕн вĕçри тĕллевне те çавнашкалах тата çав вĕçри тĕллев патне каймали çул çинче парти пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешекен требованисене те палăртса парать. Çавăнпа та программă пройектне çырса хатĕрлесси питех те пысăк вырăн йышăнмасăр тăма пултарайман.

Программă пройектне çырса хатĕрленĕ чухне „Искра" хаçат редакцинче Ленинпа Плеханăв хушшинче, çавнашкалах тата редакцин ытти членĕсем хушшинче те, пысăк разногласисем тухса кайнă. Çак разногласисемпе тавлашусем Ленинпа Плеханăв пĕр-пĕринчен йалтах уйралса кайасси патне кашт çеç илсе çитереймен. Анчах унчухне вĕсем пĕр-пĕринчен уйралса кайман-ха. Ленин программă пройектне пролетариат диктатури çинчен калакан питех те кирлĕ пункта кĕрттернĕ, рабочи класăн револĵуцире йертсе пырас роĵне уçăмлăн кăтартса панă.

Парти программин аграрла пайне те пĕтĕмпех Ленин хатĕрлесе программăна кĕртнĕ. Ленин унчухнех ĕнтĕ çĕре национализацилессишĕн тăнă, анчах вăл кĕрешĕвĕн пирвайхи тапхăрĕнче: „касса илнĕ çĕрсене", урăхла каласан, помещиксем хресченсене „ирĕке каларнă" чухне хресченсен çĕрĕсенчен касса илнĕ çĕрсене, хресченсене таварса пама ыйтакан требовани каларса лартма кирлĕ, тесе шутланă. Плеханăв çĕре национализацилессине хирĕç тăнă.

Ленин Плеханăвпа парти программи пирки тавлашнисем болĵшевиксемпе менĵшевиксем хушшинче ӳлĕм пулас разногласисене чылай йенчен палăртнă.

(ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн малали „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн çитес номĕрĕсенче пичетленет).

Суйлава хатĕрленеççĕ

ПАТĂРЙЕЛ. Комсомолăн йертсе пыракан оргăнĕсен суйлавне хатĕрленсе, Сăкăтри туллимар вăтам шкулти комсомолĕцсем суйлав инструкцине тĕплĕн вĕренчĕç.

Йулашки вăхăтра вицĕ пионер комсомола кĕчĕç. Комсомола кĕме хатĕрленекенсем татах та пур. Вĕсемпе комсорг Захарăва йулташ уйрăм калаçусем туса иртерет.

Суйлава хатĕрленнĕ май комсомолĕцсем кружоксен ĕçĕсене аванлатрĕç. Халĵ шахматпа шашка тата литературă кружокĕсем йĕркеллĕ ĕçлесе пыраççĕ.

Политикăна сахал пĕлекенсем политграмăтă кружокĕнче вĕренеççĕ. Вĕсен икĕ занĵати пулса иртнĕ. Кружока вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ Çатмин йулташ йертсе пырать.

Пуçламĕш организацин ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Пилĕк комсомолĕцăн учотнăй картăчка çук, член укçисене перекет кассине вăхатра хывса пымаççĕ, протоколсене йапăх йĕркеленĕ. Суйлав кунне çак çитменлĕхсене пĕтерни пе кĕтсе илмеле.

Н. Квасăв.

— о • о —

Çулйĕр пайĕ ответлăха туймасть

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Траĵкассинчи „Трудовик" колхоз кăçалхи çулйĕр строительстви планне 92 процент тултарнă. Колхоз йулнă ĕççене çак кунсенчех туса пĕтерет. Колхоз председателĕ Иженделĕв йулташ çулйĕр строительствине хăй йертсе пырать. Колхозра йатарласах бригадă организациленĕ (бригадирĕ Воробйов йулташ). Çакăн пекех „Коминтерн" колхоз та (председателĕ Колеçникăв йулташ) çулйĕр ĕçĕнче тăрăшса ĕçлет, хăйне уйарса панă çулйĕр участкине тикĕс, йака, тытса усрать.

Анчах кун пек лайăх ĕçлекен колхозсем районра сахал. Чылай колхозсемпе йалсоветсем çулйĕр строительствинче йапăх ĕçлеççĕ. Пантăк йалсовечĕ çулталăк хушшинче 67 кубла метр хăйăр турттарса 12 кубла метр çĕр чавмăсĕр пуçне урăх нимĕн те туман. Йалсовечĕн 230 кубла метр чул, 600 кубла метр хăйăр турттармала, 800 кубла метр çĕр чавмала тата 15 кубла метр шашка татса хатĕрлемеле пулнă. Йалсовет председателĕ Иердуковă çавĕпех тĕрлĕрен сăлтавсем çине йăвантарса ларнă май, кĕркунне çитнине те сисмен. Халĕ те ĕçлеме шутламасть. Калинин йачĕпе тăракан тата „Хĕрлĕ майак" колхозсем те йапăх ĕçлеççĕ. „Хĕрлĕ майак" колхоз çулталăк планне пĕтĕмпе те 5 процент кăна пурнăça кĕртнĕ.

Колхозсемпе йалсоветсем çулйĕр строительствинче йапăх ĕçлени районри çулйĕр пайĕ начар йертсе пынинчен килнĕ. Çулйĕр пайĕнче ĕçлекенсем (заведуйушчи Йефимăв) вырăнсене тухса çӳремеççĕ, колхозсене конкретлă пулăшу памаççĕ. Вĕсем колхозсенче йалан ĕçлекен бригадăсем организацилемен, пайанхи куна пĕтĕмпе те 3—4 колхозра кăна бригадăсем пур.

Район кăçалхи çулйĕр строительстви планне 35,6 процент çеç тултарнă, йулнă ĕççене тăвасси харушлăх умĕнче тăрать.

П. Макарăв.

— о * о —

Художĕствăлă пултарулăх олимпиади

Октăберĕн 7-мĕшĕнче Çĕрпӳре ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă йатпа çамрăксен художествăлă пултарулăх олимпиади пуçланнă. Вăл олимпиадăна хулари çамрăксемсĕр пуçне йалти çамрăксем те хутшăннă.

Малтанхи кун Çĕрпӳри ачасен хулинче пурăнакансем хăйсен пултарулăхне кăтартса панă. Олимпиадăра вăтам шкул хăйĕн художествăлă пултарулăхне уйрăмах пысăк пахалăхпа кăтартнă.

К. Михайлăв.

Ленинла сталинла комсомол 20 çул тултарнă тĕле

Всеобуч чаçĕсен 1918 çулти май уйăхĕнче Мускаври Хĕрлĕ площăтре пулнă парачĕ. (Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн Тĕп Музейĕ).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Партилĕ-массăлă ĕçе çӳлти вырăна

ЙĔПРЕÇ. Буинскри сланцă рудникĕнчи пуçламĕш парторганизацинче (парторгĕ Фадейĕв йулташ) 4 коммунис шутланса тăрать, вĕсенчен 3 член тата пĕр кандидат.

Пуçламĕш партоганизаци рудникри рабочисем хушшинче партиле-массăлă ĕçе организацилес йĕнĕпе чылай ĕçсем туна. Йулашки ике уйăх хушшинче 4 хутчен коммуниссемпе партире таманнисен пĕрлехи пухăвĕсене иртерсе, вăл пухусенче парти вĕренĕвĕ, рудникре сатарла ĕççен йулашкисене хăварт пĕтерессипе тата ытти ĕççем çинчен сӳтсе-йавнă.

Пуçламĕш парторганизаци çумĕнче 15 çынран, агитколлектив организациленĕ. Вĕсемпе çеминарсем, калаçусем иртереççĕ. Агитколлектив вăйĕпе рабочисем хушшинче политинформаци, вулавсем иртереççĕ. Иртнĕ кунсенче ПСК(б) Парти Чăваш организацин облаçри XIX-мĕш конференци ĕçĕсем çинчен тата тĕнчери лару-тару çинчен докладсем туса пана.

Пуçламĕш парторганизаци çитменлĕхесенчен пĕри вăл — парторганизаци ӳсменни. Çак йулашки ике уйăх хушшинче парти ретне çĕнĕрен пĕр çынна та илмен. Çавăн пекех сочувствуйушчине илессипе те пуçламĕш парторганизаци начар ĕçлет.

Парти вĕренĕвĕ ĕçĕпе те мухтанмала мар, коммуниссем валĵĵи уйрăм кружок организацилемен.

Тепĕр çитменлĕх вăл — пуçламĕш парторганизаци комсомола пулăшманни. Рудникри комсомол организацин питне курма çук, Казачковă комсорг ĕçлемест. Комсомол ретне çĕнĕрен 3 çамрăка илнипех лăпланса ларнă. Комсомол 20 çул тултарнă куна хатĕрленессипе нимĕн те туман. Анчах пуçламĕш парторганизаци йенчен рудникри комсомол организацине нимĕнле пулăшу пани те курăнмасть, паман та. Комсомол организаци начар ĕçленишĕн рудникри пуçламĕш парторганизаци те айăплă.

Рудникри рабочисен пурнăç условине аванлатас ĕç çителексĕр. Çĕнĕ клуба халĕ те туса пĕтермен. Хватерсенче çутă çитмест. Хăшпĕр кăçсенче краççин çуккипе тĕттĕм çĕрте ларма тивет. Лавкасенче çăкăрпа тăтăшах сут тавассине халĕ те организацилемен. Çавна пула час-часах рабочисен çăкăрсăр ларма лекет. Çавăн пекех пахча-çимĕççем те (çĕрулми, купăста т. ыт. те) çук. Кусем пирки Вăрманпродторг пуçлăхĕ Рыжов, Райсойуз пуçлăхĕ Воронков йулташсем те айăплă. Вĕсем рабочисене кирлĕ таварсем, апатçимĕç çителĕклĕ таран тăратассипе питĕ сӳрĕккĕн ĕçлесе пыраççĕ.

Пуçламĕш парторганизацин асăнна çитменлĕхсене пĕтермеле. Рабочисем хушшинче партилĕ-массăлă ĕçе кирлĕ таран организацилесе, çавăн йекех Октăбĕр умĕнхи социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса йарса, рудникри сатарла ĕççен йулашкисене хăварт пĕтермеле.

Ф. Захарăв.

ПСК(б)П историне вĕренме тĕплĕн хатĕрленмеле

Вăрмар районĕнче кăçалхи вĕренӳ çулĕнче ПСК)б)П историне вĕренекен кружоксене йертсе пыма пропагандиссене уйарса çирĕплетнĕ. Районра штатлă пропагандиссем кăçал иккĕн ĕçлеççĕ. Вĕсен пурĕ 6 кружокпа йертсе пымала пулать. Ытти кружоксене йертсе пыма парти активĕнчен уйарнă. Комсомолĕцсем хушшинче ПСК(б)П историне вĕрейме 26 кружок, учителсем хушшинче 20 кружок организацилеме йышанна. Ку кружоксенче пурĕ 308 учител вĕренмеле.

Коммуниссемпе комсомолĕцсем вĕренме хаш кружока çӳремелине пĕлеççĕ. Кăçалхи çул политвĕренĕве мĕнле организацилесси çинчен партин пуçламĕш организацисенче уйрăм пухусем туса сӳтсе-йавна.

ПСК(б)П историне тĕплĕн вĕренме тытăнасси ПСК(б)П историн Кĕске курсне кĕнекен пичетлесе каларнă хыççăн пуçланмала. Ку учебниксем пичетленсе тухаççĕ. Çак çитес кунсенче вĕсем вырансене çитмеле. Унччен пур вырансенче те вĕренӳ ĕçне тĕплĕн тытанма хатĕр тăмала.

Пирĕн районра вĕренӳ ĕçне тĕплĕн тытанма хатĕр теме çук. Вĕренӳ ĕçĕнче тĕп вырăн вăл пропагандиссене хатĕрлесси пулса тăрать. Вĕренӳ пахалăхĕ пропагандиссем кирлĕ пек вĕрентме пултарнинчен килет. Пропагандиссене тупса уйарса хуни çеç çителĕклĕ мар, вĕсене семинар витĕр кăларса хатĕрлемеле. Унпа пĕрлех парткабинетсем йĕркеле ĕçлемеле.

Пропсеминара организациленĕ, анчах пайанхи кунччен вăл ĕçе тытанман-ха. Пропсеминара ПСК(б)П райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ хăй йертсе пырать.

Парткабинетра ĕçлекен çын çукпа пĕрех. Йулашки вăхатра кунта пĕр библиотекар анчах ĕçлекелет. Тĕрĕссипе каласан, парткабинетран пропагандиссем пулăшу илни сахал. Парткабинета çавăн пекех хăварсассăн, вăл парти вĕренĕвĕнче кирлĕ пулăшу парас çук. Çавăнпа та парткабинет ĕçне вăйлатасси çинчен тĕплентерех шухăшласа, халех кирлĕ ĕççене тумала.

Çапла ĕнтĕ вĕренӳ ĕçне хатĕрленнĕ çĕрте пирĕн районра çакăн пек пысăк çитменлĕхсем пур, районри парторганизацин вĕсене халех çине тăрса пĕтерессишĕн хыта кĕрешмеле.

Е. Филиппăв.

Хаçатсене пăхса тухни вырăнне

Редакцин пурнăçĕпе ĕçĕсем

Çĕмĕрле — сталинла пилĕкçуллăхсенче ӳссе çитĕннĕ çĕнĕ хула. Çĕмĕрле вăрман пулнă вырăнта шăтса ӳснĕ социалисăмлă хулара халĕ 15 пин çын ытла пурăнать. Унта промышлĕннăçлă предприйатисем, тĕрлĕ ертелсем, шкулсем, библиотекăсем, клубсем тата ыттисем те сахал мар. Çĕмĕрле — Чăваш республикĕн промышлĕннăçлă центрĕсенчен пĕри.

Çак хулара „**Социалисăмлă ĕç**" хаçат тухса тăрать. Хаçатăн хула пурнăçне, хулари предприйатисен ĕçĕсене, унта ĕçлекен стахановĕцсемпе ударниксен ĕçĕсене куллен тата таранăн çутатасси хисеплĕ ĕç пулса тăмала. Хаçат ĕçне рабочисене — стахановĕцсене, ударниксене, инженерсемпе техниксене тата кулĵтура фронтенче ĕçлекенсене нумайăн хутшăнтармала. Вĕсем хаçатăн активлă корреспонденчĕсем пулса, районăн пурнăçне пур йенчен те таранăн çутатма пулăшмала. Анчах Çĕмĕрле районĕнчи «Социалисăмлă ĕç» хаçат хула пурнăçĕнчен, предприйатисен пурнăçĕпе ĕçĕсенчен, стахановĕцсен пахаопычĕсене çутатассинчен айакра тăрать. Хаçата вуласан, ăна ытти йалхуçалăхлă районсенчи хаçатсенчен нимĕнпе те уйарма çук. Хаçатра хула пурнăçĕ çинчен, промышлĕннăçлă предприйатисен ĕçĕсем çинчен çырнă материалсем питĕ сахал. Ийулĵ, август тата çеĥтабĕр уйăхĕсенчи номĕрсене илсен, „**Социалисăмлă ĕç**" хаçат комбинат ĕçĕсем çинчен аран-аран 7 заметкă пичетлесе кăларнă. «Болĵшевик» савăта илсен, ун çинчен Иваницкий йулташ çыравĕсемсĕр пуçне, урăх пĕр заметкă та пичетлемен. Хулари ытти предприйатисемпе ертелсем çинчен хаçат пĕр сăмах çырма та вăй çитереймен.

«Социалисăмлă ĕç» хаçатăн автăрсен коллективĕ çук. Çĕмĕрлери предприйатисенчи стахановĕцсенчен Касйанава, Толстов йулташсемсĕр пуçне урăх пĕр стахановĕц та хаçата çырса тамаст. Инженерпа техниксенчен Иваницкий йулташ çеç хаçата çырса тăрать. Çапла вара хаçатăн хулари пурнăçне çутатакан корреспондентсен йышĕ 3—4 çынтан та ытла мар. Ку ĕнтĕ хаçат производствăри стахановĕцсемпе ударниксенчен айакра тăни, парти Тĕп Комитечĕ кашни хаçатăн автăрсен коллективĕ пулмала тесе кăтартса панине „Социалисăмлă ĕç" хаçат редакцийĕ пурнăçа кĕртменни çинчен кăтартса парать.

Хулари ĕççыннисем хăйсен хаçатĕнчен клубсен, библиотекăсен, театрсен ĕçĕсене, спортпа физкулĵтурă ыйтăвĕсене куллен çутатса пыма ыйтаççĕ. Анчах Çĕмĕрлере тухса тăракан хаçат çак ыйтусене пачах та çутатмасть. Çеĥтабĕр уйăхĕнче çеç хаçат çуллахи театрти çитменлĕхсем çинчен аса илет. Паллах, çуллахи театр çеĥтабĕр уйăхĕнче хăйĕн ĕçне пĕтерет.

Хаçат политикăлă документсене пичетлесе каларассипе те часчасах кайа йулать. Хаçат нумай ыйтусене вулакансем интересленмеле çутатаймаст. Çавăнпа та унăн тиражĕ 2 пинрен иртмест. Çĕмĕрле районĕнчи хаçат çавăн пек сахал тиражпа тухни редакцин пысăк çитменлĕхĕсем çинчен калать.

Хаçатăн хула, йал тата пĕтĕм районăн пурнăçне тĕплĕн çутатма пур условисем те çителĕклĕ. Хаçат пĕр кун сиктерсе тухса тăмала. Анчах редакци тата райком айăпĕпе „Социалисăмлă ĕç" хаçат çеĥтабĕр уйăхĕнче 15 номĕр тухас вырăнне 7 номĕр çеç тухнă. Парти райкомĕ, хаçатăн ответлă редакторĕ П. Лукин йулташ редакцинче ĕçлеме çын тупаймаççĕ, çынсем пур, парти райкомĕ хăйĕн хаçачĕ çине çаваранса пăхмасть. Çавăнпа редакци ĕçлекенсемсĕр тăрса йулнă.

Йулашкинчен, редакци çурчĕ пирки. Икĕ çул хушши ĕнтĕ „Социалисăмлă ĕç" хаçат редакцийĕ пĕр пĕчĕк пӳлĕмре ĕçлет. Вăл пӳлĕме пĕр сĕтел вырнаçать. Редакцинче виçĕ çын пулсан, виççĕше те пĕр сĕтел тавра ларса ĕçлеме тытанаççĕ. Парти райкомĕн редакцине çурт тупса парас ĕçе васкатмала.

Ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă тĕле

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: „Комсомолĕцсем Мускав—Донбасс чукунçул магистралĕн строительствинче".

Супонин художник картинĕнчен („Пресс-клише").

Чехословакири лару-тăру

Чехословакири демократилĕ вăйсен пĕрлĕхĕшĕн пыракан кĕрешÿ

Чехословакири реакционерсем (вĕсене Гитлĕр пулăшать) Чехословакире демократилĕ ирĕклĕхсене пĕтерсе лартса фашисла йĕрке туса хума тăрăшаççĕ. Çак харушлăха кура Чехословакири рабочисен массисем хушшинче фашисăма хирĕç кĕрешме пĕрлĕх фрончĕ тăвассишĕн анлă йухăм саралса кайнă. Раковицари (Моравире) „Отто" фирмин саватĕнче социал-демократсен партинче, чехсен социалисла партинче тата коммунисла партире членра тăракан рабочисем хăйсен партисен тĕп комитечĕсенчен пĕрлĕхлĕ рабочи партийĕ тума—халĕхи вăхăтри йăвар условисенче Чехословакири рабочисен интересĕсене сыхлама пултаракан парти туса хума ыйтса решени йышăннă. Ытти чылай хуласенчи рабочисем те çавăн пек решенисем йышăннă.

Çаксем пурте ĕнтĕ, халĕхи вăхăтра йăвар лару-тăру пулса тăнине рабочи класăн малта пыракан пайĕ лайăх ăнланса илни çинчен, Чехословакири компарти фашисăм харушлăхне хирĕç кĕрешмешкĕн пĕрлĕхлĕ фронт тума чĕннине хĕрÿлĕн йрăласа çĕклении çинчен пит лайăх каласа параççĕ.

(ТАСС).

Словаки правительствин реакцилĕ ĕçĕсем

Братиславăран (Словаки столици) пĕлтернĕ тăрах, Словаки правительстви пухусем, митингсем тата демонстрацисем тума чарса лартасси çинчен решени йышăннă. Пĕтĕм ресторансене, кафесене т. ыт. те каçхине 7 сехетрен кайа йулмасăр хупмала тунă. Чылай хуласенче каçхине 8 сехет иртсен урамсене тухма чарса лартнă. Словакири клерикалсен партийĕ туса хунă штурмовой отрйадсем («Глинка гвардийĕ») киревсĕр ĕçсем тăвать: коммунистсен хватерĕсене ухтарать т. ыт. те.

Çаканпа пĕрлех тата, компартийĕ ĕçлеме чарса лартнине хирĕç протест туса Словакири чылай хуласенче забастовкăсем пуçланни çинчен пĕлтерÿсем пур.

(ТАСС).

Полъшă çарĕсем Чехословаки территорине йышăнаççĕ

ВАРШАВА, октăберĕн 10-мĕш. Полъшă çарĕсем Чехословакин Силезине йышăнмали плана кĕтмен çĕртен улăштарса хунă. Çар командованийĕ Богумин районне планпа пăхса хунă срукран икĕ кун малтанрах йышăнма хушнă. „Газета польска" корреспонденчĕ Полъшă оккупанчĕсен çавăн пек васкавлă ĕçне „Богуминре нимĕçсемпе чехсем хушшинче хирĕçÿсем пулса иртеççĕ, çавсем васкатма хушаççĕ", тесе ăнлантарса пама хăтланать.

Октăберĕн 9-мĕшĕнче Полъшă çарĕсем Карвинна тата Орлов районĕсене йышăннă. Çав куннех Сухе, Шумбарк, Лютин тата ытти вырăнсене тытса илнĕ.

* * *

ВАРШАВА, октăберĕн 10-мĕш. Енер Полъшă правительствин ларăвĕ пулса иртнĕ. Вăл ларура республика президенчĕ Чехословакирен тытса илнĕ районсене Полъшă çине кĕртесси çинчен тăратнă декрет пройектне йышăннă. Çавăн пекех Полъшăн тĕрлĕ саккунĕсене (вăл саккунсем 70 çитеççĕ) çĕнĕ районсенче сарас пирки тăратнă декрет пройектне те йышăннă.

(ТАСС).

Болгарин генеральнăй штаб начальникне вĕлернĕ

Октăберĕн 10-мĕшĕнче Софире (Болгари столици) генеральнăй штаб начальникне Пейĕв генерала вĕлернĕ. Вĕлерекенĕ, запасри офицер, хăйне-хăй пĕрĕнсе вилнĕ.

(ТАСС).

Англи пичечĕ Судет облăçĕнчи лару-тăру çинчен

ЛОНДАН, октăберĕн 10-мĕш. „Дейли телеграф энд Морнинг пост" хаçатăн Парижри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрах, Германи Чехословакине çарсем йышăннă районсенчен тарнă Судет нимĕçĕсене, вĕсемпе пĕрле социалиссемпе коммуниссене те, пĕтĕмпех кайала таварса пама хушнă. Çавăн пекех, Германи Чехословаки влаçне пилĕккĕмĕш зонăра пурăнакан нимĕççене çав районсенчен тухса кайассине чарма хушнă. Германи çарĕсем йышăннă районсенчен тарса тухнă нумай çынсене Чехословаки влаçĕ кайала çав районсене таварса йанă. Кунсăр пуçне Германи çарĕсем йышăннă тата йышăнмали районсенче çынсене тухса тарма чăрмантарас йĕнĕпе пур кирлĕ ĕççене те туса иртернĕ.

„Дейли експресс" хаçат корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрах, Брнора 795 Германи тата Австри емигранчĕсем Чехословаки полицийĕнчен октăберĕн 11-мĕшĕнче 12 сехетчен Чехословакинчен тухса кайма хушса çырнă приказ илнĕ. Çав емигрантсенчен 22-не Германи полицийĕ шырать.

(ТАСС).

Полъшă фашисĕсен çĕнĕ требованийĕсем

Тешин (Чехословаки) Силезинчи районсене туртса илнипе тăранмасăр, Полъшă фашисĕсем халь çĕнĕрен чылай требованисем каларса таратнă.

„Вечур варшавски" хаçат: халĕхи вăхăтра Чехославакин 120 пин çын пурăнакан 2.400 тăваткал километрла территорине Полъшă çумне пĕрлештересси çинчен сăмах пырать, тесе çырать. Хаçат намăса пĕлмесĕр: вăл территори Полъшă туртса илнĕ Тешин (Чехословаки) Силезинчен виçĕ хут пысăкрах, тесе çырать.

(ТАСС).

Полъшă туртса илнĕ районсенчи Чехословаки граждăнĕсене кăларса йараççĕ

Полъшă çарĕсем туртса илнĕ Тешин (Чехословаки) Силезинчи районсенчи Чехословаки граждăнĕсене Полъшă влаçĕсем унтан ирĕксĕрлесех кăларса йама пуçланă. Полъшă пичечĕ пĕлтернĕ тăрах, Силезире распорйажени кăларнă, вăл распорйаженире Чехословаки граждăнĕсене пурне те „нойаберĕн 1-мĕшчен Полъшă территорийĕ çинчен тухса кайма" хушнă.

(ТАСС).

Фашисла палăчсем „ĕçе" тытăнаççĕ

Гестапо (Германири вăрттăн полици) начальникĕ Гиммлĕр распорйажени панă тăрах, Судет облăçне суйласа илнĕ фашисла охранниксен отрйачĕсене кăларса йанă, вăл отрйадсене „вилĕм батальонĕ" тесе йат панă. Вĕсен задачи Чехословакин Германи йышăннă районĕсенче „йĕрке туса хурасси" тата „марксисла" елементсене пĕтересси.

(ТАСС).

Чикĕре.

Сăвви А. Ивановăн (пограничник)

Вăлăтлă. Васкамасăр

Муз. Г. Лисковăн.

(Запевало можно петь с альтами)

Уйăх йăпшăнса хăпарчĕ,
Кăвак, тăрă тÿпене.
Двина шывĕ кăшт хумханчĕ,
Унта уйăх чÿхенет. — 2 хут.

Çывăратĕ Белоруççи,
Кашласа тăрать вăрман.
Йăпшăнса çÿрет çил уççăн,
Урăм-сурăм шăхăрса. — 2 хут.

Епĕр кашлакан вăрманăн
Чатлăхне хыт тинкерсе,
Ирĕн-каçăн хураллатпăр
Çĕршывăмăр чиккине. — 2 хут.

Тĕлĕрместпĕр пĕр самант та,
Тинкĕретпĕр таврана:
Каçас çук нимле тăшман та,
Епĕр сыхă йаланах. — 2 хут.

Нийепле хайар тăшман та
Хăратаймĕ халь пире.
Йунлă аллине тăсать-тĕк,
Тĕп тăватпăр пур-пĕрех. — 2 хут.

Епĕр паттăр, вăйлă, çирĕп,
Епĕр—çулăмлă кăвар.
Никамран та, нихăçан та
Хăраман вăл Хĕрлĕ Çар. — 2 хут.

В. В. Майаковский произведенийĕсене пысăк тиражпа кăлараççĕ

Нумай пулмасть ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ В. В. Майаковский поетăн произведенийĕсене пичетлесе кăларма редакци составне çирĕплетнĕччĕ. Çав редакцин пирвайхи ларăвĕнче Майаковский произведенийĕсене кăларас ыйтăва пăхса тухнă.

1939 çулта поетăн чаплă произведенийĕсене „Владимир Ильич Ленин", „Хорошо" поемăсене пысăк тиражсемпе кăлараççĕ, вĕсен тиражĕсем 200—300 пин екземпляр пулаççĕ. Çавăн пекех, оборонă çинчен çырнă сăвăсен кĕнеки тата суйласа илнĕ сăвăсен пĕртомникĕ тухаççĕ.

Çитес вăхăтрах аслă поетăн пĕтĕм произведенийĕсене пухса кăларма план туса хатĕрлеççĕ.

Культурăлăх, тасалăх кирлĕ

Производства лайăх, ăнăçлă ĕçлесе пырасси ĕç вăйĕ, машинăсем, чĕртавар çителĕклĕ пулнинчен кăна мар, тата ĕç вырăнне организацилеме пĕлнинчен, ăна таса тытнинчен те чылай килет. Анчах Çĕмĕрлери „Труженик" савăтра çавсене кирлĕ пек пурнăçа кĕртсе пыраççĕ теме çук. Чылай цĕхсемпе уйрăм аггрегатсем, станоксем патĕнче культурсăрлăх, тасамарлăх пуç пулса тăнă. Техникă тĕлĕшĕнчен хăрушă вырăнсене картламан. Картланă вырăнсем те йĕркелĕ мар, йăтăнса аннă пирки сапаланса выртаççĕ. Катка-пичке тăвакан цехра йăтарласах 4 уборщицă ĕçлеççĕ. Çапах цеха таса тытмаççĕ, урайĕнче йурăхсăр детальсем чылай. Хăшпĕр вырăнта урайĕ те йăтăнса анас пекех чĕтренсе ларать. Станоксем, люксем патĕнче йурăхсăр йапаласем выртаççĕ, уйрăмах люксем патĕнчен иртсе çÿреме хăрушă, хăмасем йăтăнса анас патне çитнĕ.

Техникăна вĕренес ĕçе савăтра кирлĕ пек йĕркелемен. Çĕнĕрен пынă рабочисене техникăна вĕрентмесĕрех станоксем, машинăсем патне ĕçлеме тăратаççĕ. Çавна пула инкек-синкексем пулаççĕ.

Савăтра уйрăмăнах кадрсене, çĕнĕ çынсене пăхса ÿстерес тĕлĕшпе йапăх ĕçлеççĕ. 50 ача валли тунă ача сачĕ пачах йурăхлă вырăнта мар. Çуртра тăвăр, вентиляци туман. Ачасем кровать çителĕклĕ мар пирки урайĕнчех выртса-тăраççĕ. Кухньăра тасалăх йĕнчен йапăх, апат-çимĕçе лаçра пĕçереççĕ. Çавăнпа пĕрлех тата медицинă пункчĕ йапăх ĕçленине палăртмала. Медпункт вырнаçнă çурт та çав тери пĕчĕккĕ, унта çынсене лармалăх, выртмалăх та вырăн çитмест. Арçынсемпе хĕрарăмсене пĕр пÿлĕмре пăхаççĕ. Анчах çапла пулин те савăт администрацийĕ ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе çав тери сахал ĕçсем тăвать.

И. Стольаров.

Пирĕн календар

А. В. КОЛЬЦОВ

Пайан, октăберĕн 14-мĕшĕнче, вырăссен иртнĕ ĕмĕрти талантлă поечĕсенчен пĕри Алексей Васильевич Кольцов çурални 130 çул тултарчĕ. Вăл Воронĕж хулинче, выльăх-чĕрлĕхпе суту-илÿ туса пурăнакан çын çемйинче çуралнă. Пулас писатĕл çамраклах кĕнекесем вулас ĕçе, хăйĕн пĕлÿлĕхне кунсеренех ÿстĕрсе пырас ĕçе пысăк хавхаланупа туртăннă. Анчах ашшĕ унăн, сутуçă-хыткукар, ачине вĕрентесшĕн тăрăшман, ăна вăл хăйне пулăшакан приказчик çеç тăвасшăн пулнă: кĕнекесем вуланине, литература ĕçĕпе ĕçлесшĕн тăрăшнине курсан Алексейе хăтăрса пăрахнă, вăл чарусăр ачасен ĕçĕ çеç, тесе шутланă.

Ашшĕ ĕçне хутшăннă май, çамрăк Кольцов йалсем тăрăх нумай çÿренĕ, тĕрлĕ çынсемпе тĕлпулса калаçнă, паллашнă. Халăх пурнăçĕ, крепосла хресчĕнсенчен хуйхи-суйхи, кулленхи асаплă пурнăçĕ уншăн питĕ те çывăх тата ăнланмала пулнă.

Кольцов хăйĕн çемйин тата çав çемйе таврашĕнчи усламçăсен ĕçĕнчен пăраннăçемĕн пăраннă. Унăн пурнăç çулĕ урăхла пулмала иккенне ăнланакан çынсем те тупăннă, ăна вăл хăй те часах ăнланнă.

Часах Кольцовшăн пысăк телей сиксе тухнă. Мускавра вăл аслă Пушкинпа, Белинскипе, Жуковскипе çывăххăн паллашнă. Александр Сергейевич Пушкин пысăк хаваслăхпа кĕтсе илнĕ ăна, нумай калаçнă; Белинский таса чунлă, аслă ачана чĕререн йуратнă, унăн малали ăраскалĕшĕн хамăр ответлă пулатпăр, тесе сăмах панă.

Çакăн хыççăн çамрăк Кольцов, аслă вырăс халăхĕн аслă ывăлĕсем ăна йуратнине курса çутă шанчăкпа çунатланнăскер, чĕрери вĕри хаваслăхпа çĕкленсе нумай-нумай сăвăсем çырнă. Унăн сăввисем вырăс халăх поезийĕн сĕткенĕпе тулса тăнă, хăйĕн творчествине поет халăх творчествипе çыхăнтарнă, пуйанлатнă. Ахальтен мар ĕнтĕ унăн сăвви-йуррисем халĕ те кивелмен. Вĕсене халăх халĕ те йуратса вулать, йуратса йурлать. Кольцов хăйĕн сăвви-йуррисенче хресчен ĕçне, хресчен пурнăçĕн тĕрлĕ йĕнĕсене пысăк маçтăрлăхпа чăнлăн сăнласа кăтартнă. Çавăнпа та вăл халăх поечĕн йатне илсе вырăс литературин историне кĕрсе йулма чăннипех тивĕçлĕ пулнă.

А. В. Кольцовăн пурнăçĕ вăхăтсăр таталнă. Вăл 33 çула çитсенех, 1842 çулта, чахоткă чирне çĕнтерме пултараймасăр, ĕмĕрлĕхе куçне хупнă.

Пропагандиссем валли лекци

ПСК(б)П Обкомĕн партвĕренÿ çуртĕнче ыран, октăберĕн 15-мĕшĕнче, хулари пропагандиссемпе парти активĕ валли „Ленинăн „Резвитие капитализма в России" кĕнеки мĕнле вырăн йышăнса тăни" темăпа лекци пулать.

Лекци партвĕренÿ çуртĕн залĕнче, каçхине 6 сехетре пуçланать.

ТŸРЛЕТНИ

„Чăваш Коммунĕ" хаçатăн октăберĕн 9-мĕшĕнче тухнă номерĕнче, иккĕмĕш страницăра, „Парти активĕн районри пухăвĕ" йатлă статйара редакци асăрхайманнипе Трак районĕнчи судйе хушаматне йăнăш кăтартнă. Ăна **Васильевĕв** вырăнне **Михайлăв** тесе тÿрлетсе вуламала.

Ответлă редактăр заместителĕ В. ЙАКĂВЛЕВ.

„Пурнăçа вăрăмлатасси"

А. А. Богомолец академикăн çĕнĕ кĕнеки

Етем мĕн авалтанпах хăйĕн пурнăçне вăрăмлатмали майсем тупма тăрăшнă. Кучухнехи наукă аллинче органисăма вăхăтчен ваталасран тата вилесрен сыхлантармали пысăк майсем пур.

Нумайах пулмасть академик Богомолец пĕр пĕчĕк кĕнеке кăларнă*). Кĕнекере 93 страницă. Çак кĕнекере автăр етем органисăмĕн мĕншĕн вăхăтчен малтан ватăлмала пулнине кăтартакан процессене анализ тăвать.

Етем органисăмĕнче, тет А. А. Богомолец, пĕрмайăх ишĕрĕлсе çемĕрекен ĕçпе тăвакан ĕç пулса пырать. Клеткăсенчен пĕркасси органисăм пурăнна чухне веçемсĕр ĕрчесе пына вăхăтрах, теперкасси ванса, пĕтсе, вилсе пырать. Клеткăсем нумайăн йе сахалăн ĕрченинчен, çĕнелсе пынинчен органисăм пурнăçĕ нумай вăхăта йе сахал вăхăта пырасси килет. Анчах та ку пурнăç нумайа пырасси çинчен калакан фактăрсенчен пĕри кăна-ха.

Çамал примерсем тăрах, çамахран—туберкульоз, сифилис, рак чирĕсемпе кĕрешни тăрах А. А. Богомолец органисăм пурнăçне вăрăмлатасси пĕрлештерекен ткăньсен чăтăмлăхĕнчен нумай килнине кăтартать.

Склероз, урăхла каласан пĕрлештерекен ткăнь хытса ларни çынна ваталтаракан тĕп сăлтавсенчен пĕри пулать. Богомолец тăвакан тепĕр вывăд çакăн пек ĕнтĕ.

Малала автăр етем органисăмĕн пурнăçĕнче ашри секреци железисем мĕнле вырăн йышăнса тăнине анализ тăвать. Пĕр пĕчĕк, пăрçа пысăкĕш гипофиз желези (пуç мимми патĕнче) органисăм аталанăвĕпе ÿсĕмне йĕркелесе пыракан, малала йарса таракан йапаласем хатĕрлесе тарать. Щчитовиднăй железа йапаласем улшăнса тăрассине йĕркелесе пыракан йапала т. ыт. хатĕрлет. Варлăх йуна каймасть, тет А. А. Богомолец, анчах вăл хатĕрлекен арçын ар железисем çамартасем, хĕрарăм йаичникĕсем пекех, йуна органисăм пурнăçĕнче пысăк улшăнусем тăвакан йапаласем парса тарать.

Нерва системи. Нерва мĕнле пулнинчен органисăм сывлăхĕ килет. Нерва системине хисепе илмесĕр пурнăça вăрăмлатасси çинчен таракан ыйтăва татса пама çук. Автăр органисăмăн физиологи процесне пысăк влийани паракан туйăмсем çинчен çырать. Вăл туйăмсем: савăнăç, хăрани, çиллении, ватăнни, хуйăх, кульанни. Харани, ĕçлемесĕр пурăнни, кичемленни етем органисăмĕшĕн вилемлĕ пулма пултараççĕ. Органисăма чи кирли вăл ĕç. XVIII-мĕш ĕмĕртех пĕр паллă врач Гуфеланд çапла çырнă:

„Пĕр йулхав çын та ватăлăччен пурăнман; сĕм ватта çитиччен пурăннисем вĕсем пурте пурнăçа ĕçлесе иртернĕ çынсем".

Академик Богомолец çакна пала тăвать: кулленхи пурнăçра çынсем питех те нумай чухне нервă системи çине психикăлă шухăшсем мĕн пек пысăк влийани туни çинчен, апла пулсан, вĕсем çын пурнăçĕ нумайа пырасси çавăнтан килни çинчен манаççĕ.

Органисăма вĕçĕмсĕр отравит туса пыни час-часах вăхăтчен ватăлтаракан сăлтав пулать. Отравленисем час-часах апат ытлашши çинĕрен, ерех тавраш ытлашши нумай ĕçнĕрен, никотинран пулаççĕ.

Микробсем пыршă каналĕнче питĕ нумайăн пурнăççĕ, уйрăмах вĕсем хулăн пыршăсенче нумай. А. А. Богомолец академик Мечникăв органисăма кефир йе йÿçнĕ сĕт пама сĕннипе килĕшет. Сĕт микробĕсем çĕрĕк микробĕсене ĕрчеме чараççĕ.

Кĕнекен иккĕмĕш пайĕ мĕнле майсемпе вăхăтсăр ваталассине чарма пулни çинчен калать. Автăр историлĕ тата кучухнехи фактсем тăрах етемĕн пурнăç тăршшĕ 150 çул пулать, тесе кăтартать.

Çакантах вăл тата çака мĕн асăрхаттарса хăварать. „Кучухнехи биологи, тет вăл, тĕрлĕ выльăхсен пурнăç тăршшĕ мĕн чухлĕ пулмалине çирĕплетсе паракан обиективлă, наукă йĕнчен çирĕп паллăсем туса çитереймен-ха".

Киййĕвра, Украинă республикĕнчи Наукăсен Академийĕн клиникăлă физиологи институтĕнче учонăйсем, А. А. Богомолец йертсе пынипе, пурнăça вăрăмлатас ыйтăва пур йĕнчен те сăнаса вĕренеççĕ. Ку ĕç тин çеç пуçланать-ха. Апла пулсан та, Богомолец академик çак ыйту тăрăх халĕхи вăхăтра та çителĕклĕ таран çирĕплетсе панă наукăлă шухăшсем пур, тет.

Етеме вăхăтсăр ваталтарса вĕлерекен сăлтавсем хушшинче пысăк вырăн социальнăй сăлтавсем йышăнса тăраççĕ. Совет Сойузĕнче социалисăм çĕнтерни наукăна ĕçлеме питĕ пысăк майсем пачĕ. Тĕнчери нихăш çĕршывра та наукăшăн пурнăçа вăрăмлатас йĕнĕпе ĕçлеме пирĕн çĕршывра туса панă пек лайăх условисем çук. Государствă çынсемшĕн тăрăшни, сывлăха сыхлас ĕçсене пысăккăн сарса йани, çамрăксене воспитани парас культурă вăйлă пулни, ĕçе çамăллатни, йалхуçалăхне, промышлĕнăçа механизацилени çаксем пурте етем пурнăçне вăрăмлатас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Çĕнĕ вĕрентÿ клеткăсене вăхăтсăр ырханланма парас мар тата вĕсене çĕнетсе йарас шутпа ÿте йун йарасси тата ку шутпа çĕнĕ йышши сывороткăпа усă курасси çинчен калакан пай питех те интереслă. Богомолец академик ватăлăхпа вилĕме хирĕç кĕрешес ĕçре çак меслетсен малашлăхĕ питех те пысăк пулма пултарни çинчен калать.

Ватăлăх çитмели срuксем çинчен каласа А. А. Богомолец: пурнăçпа наукă ар железисене çĕнĕрен лартса йе органисăма ендокриннăй препаратсем кĕртсе органисăма çамрăклатма хăтланни нимĕн те пама пултарайманнине кăтартрĕç, тет. „Етем пурнăçне вăрăмлатассишĕн кĕрешесси ватăлнă органисăма çамрăклатма тăрăшни çинче тытăнса тăмала мар. Шыв йухăмне кайала çавăрма йăвăртарах. Анчах органисăм функцисем кивелсе пынине, ватăлăха, хăвăн пурнăçна йĕркелĕ тытнипе, чарма пулать".

Кĕнекен йулашки пайĕнче пурнăçа йĕркелĕ тытасси мĕне пĕлтерни çинчен каланă. Автăр пĕре те вулакана хăратмасть. Вăл пурнăça обиязательнă йĕркепе вăрăмлатма пултаракан йĕркесен принципĕ çинчен çеç калать. „Вăрăм пурнăçшăн кĕрешмели тĕп йĕрке вăл: нимĕн те ытлашши пулмала мар. Кăмăла сыхлас пулать. Çакăнта етемĕн пултарулăх вăйĕ, çакăнтан йурату, вăрăм пурнăç килет".

„Пурнăça вăрăмлатасси" çинчен калакан кĕнекене пысăк отимисăмпа çырнă. Автăр социалисăм çĕршывĕнче пысăк вăй илнĕ наукă çĕнтерессине хытă ĕненсе тăрать. «Наукă, — тет автăр çак чаплă кĕнекен йулашки строкисенче, — етем аталанăвĕн халĕхи вăхăтри тапхăрĕнче виçелĕ пурнăç тăршшĕ 125—150 çул хушши пулма пултарнине кăтартать. Анчах та çак цифрăсене те йулашки виçе тесе калама çук".

З. Островский.

*) Академик А. А. Богомолец „Продление жизни". Изд. Академии Наук УССР, Киев, 1938

Чăвашсен Трахом институтне

Шупашкарта ĕçлеме

аслă бухгалтĕр, бухгалтĕр тата кассир-счетовод

КИРЛĔ

Ĕç вăхăтĕнче çак адрĕспа ыйтса пĕлмеле: г. Чебоксары, Канашская улица, дом № 27.

ДИРЕКЦИ.

Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн Снабжени кантурне

бухгалтĕр кирлĕ.

Администраци.

2—1

ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи çулйĕр управленине

бухгалтĕр-ревизор-инспектăр тата чертежницă кирлĕ.

Çак адрĕспе ыйтса пĕлмеле: Дорожное Управление при СНК ЧАССР (гор. Чебоксары, ул. 15 лет комсомола, дом № 2)

2—2

„ЧĂВАШ КОММУНĔ" ÇЫРĂНСА ИЛМЕЛИ ХАКСЕМ: ПĔР УЙĂХА 2 т. 50 пус. 3 УЙĂХА 7 т. 50 п., 6 УЙĂХА 15 т., ÇУЛТАЛĂКА 30 тенкĕ. ПОДПИСКĂНА ÇЫХĂНУ УЙРĂМĔСЕМ, ПИСМОНОСЕЦСЕМ ЙЫШĂНАÇÇĔ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 531. Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 793 ф. б. 58 × 84 п. л.